24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 п.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
ОКТЯБРЬ
23
КĔÇНЕРНИКУН
250 (5965) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Обком пленумĕн решенийĕсене хăвăрт пурнăçа кĕртессишĕн

ВКП(б) Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ икĕ пысăк ыйту сӳтсе-явса тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ. Çав решенисене хăвăрт тата пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртесси—республикăри парти организацисен çывăх вăхăтри чи кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Республикăра партиллĕ-политикăллă ĕç мĕнле тăни çинчен ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ тунă доклада сӳтсе-явса, пленум çак ĕç чылай районсенче çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Çакă вара хальхи обстановкăра, пирĕн çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăнă чухне, парти организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Совет халăхĕ туса пыракан отечественнăй вăрçă пĕтĕм ĕçе урăхлатса çĕнетме хушнă тата халĕ те хушать. Парти, совет, комсомол тата профсоюз организацисен халĕ нихăçанхи пек мар организациллĕ, дисциплинăллă пулса ĕçлемелле. Çак чăнлăха ăнланса илсе ăна пурнăçа кĕртнĕ çĕрте партиллĕ-политикăллă ĕç те, хуçалăх ĕçĕсем те ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Калинински, Хĕрлĕ Чутай тата Чкаловски районсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе çӳлĕ вырăна лартнă. Кунта райкомсен секретарĕсем Кудряшов, Кузьмин тата Валеев юлташсем партиллĕ-политикăллă ĕçпе куллен интересленеççĕ, хăйсем колхозниксене докладсем туса параççĕ, пуçламĕш организацисене конкретлăн пулăшса пыраççĕ, парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе ĕçе пĕр вăйсăрлатмасăр туса пыраççĕ, партипе совет активне активлăн ĕçе явăçтараççĕ. Çавăнпа ку районсенче ялхуçалăх ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пычĕç, колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыни хăйĕн результачĕсене пачĕ.

Анчах вăл ĕçе малалла та вăйлатса пымалла-ха. Пленум ку тĕлĕшпе çирĕп кăтарту парса хăварчĕ:

«Пленум ВКП(б) Шупашкар горкомне тата райкомсене пурне те ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кĕрешĕве вăйлатма, парти членĕсен пухăвĕсене, райкомсен пленумĕсене тата политикăпа хуçалăх ыйтăвĕсене сӳтсе-явас тĕлĕшпе актив пухăвĕсене тăтăшах туса ирттерме хушать. Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса тăнине ĕçре кăтартса панă чи лайăх юлташсене парти ретне илес ĕçе куллен туса пымалла».

Пленум Чăваш парторганизацинчи коммунистсене пурне те обстановкăн йывăрлăхне тата пирĕн тăван çĕршыв умĕнчи хăрушлăха ăнланса илме, йăваш чунлă пулас тата тимсĕр пурăнас йăлана пăрахма, предприятисемпе учрежденисен тата колхозсен ĕçне лайăхлатса пур заданисене те вăхăтра пурнăçа кĕртмелле тума, тăшмана çĕмĕрсе тăкас ĕç валли пĕтĕм вăй-хăвата мобилизацилеме чĕнсе решени йышăнчĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене тата ялхуçалăх продуктисен заготовкисене вĕçлесси çинчен пленум ЧАССР Совнарком Председателĕн Сомов юлташăн докладне итлесе сӳтсе-яврĕ.

1941 çул колхозсем организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пынин çулĕ пулса тăчĕ. Тырпул тухăçне, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тата вĕсен продуктивноçне хăпартса пырас ĕçре колхозсем пысăк çитĕнӳсем турĕç. Гектартан 100-шер пăт тырă туса илнĕ тата 4—5-шер ферма тытакан колхозсем халĕ республикăра çĕршерĕн шутланаççĕ. Кашни гектар пуçне 14—15-шер центнер тырă туса илнĕ районсем те кăçал йышлă пулчĕç. Республикăри чылай колхозсем, «Тырпул тухăçне ӳстернĕшĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне хăпартнăшăн Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе, пуян тырпул туса илчĕç, ăна пухса кĕртсе пĕтерчĕç тата государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокчен малтан тултарчĕç.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче республикăри колхозлă хресченсен производствăллă тата политикăллă активлăхĕ çĕнĕ вăйпа çĕкленсе кайрĕ, вĕсен ĕç тухăçлăхĕ хăпарчĕ, ĕç дисциплини çирĕпленчĕ. Колхозсем кĕрхи акана ăнăçлăн ирттерсе плана пăхнинчен 24278 гектар ытларах тĕштырă акса хăварчĕç.

Анчах партипе совет организацисем тата çĕрĕç органĕсем пурте мар хальхи вăхăт ыйтнă пек ĕçлерĕç. Колхозниксен производствăллă активлăхне тивĕçлипе ертсе пырайман çĕрте ялхуçалăх ĕçĕсем кая юлса кайрĕç. Улатăр, Йĕпреç, Кувакино, Куславкка тата Первомайски районсем уйрăмăнах çителĕксĕр ĕçлерĕç. Ку районсенче партиллĕ-политикăллă ĕç те тивĕçлĕ вырăнта пулман. Районри работниксем колхозсене конкретлăн тата куллен ертсе пырас вырăнне гастролерсем пек колхозран колхоза çӳренĕ, анчах кирлĕ пулăшăва паман. Çав районсенче вара тырпул тата ытти продуктсен заготовкисем те юлса пынă.

Кунпа пĕрлех пленум Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов тата СССР Наркомзагĕн Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Митьков юлташсем хăйсен аппарачĕн ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса çĕнетменнине, тырпул пухса кĕртес тата хатĕрлес ĕçсене куллен оперативлă ертсе пырайманнине паллă туса хăварчĕ.

Пленум 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене килес çывăх вăхăтрах вĕçлесе çитерме хушса хăварчĕ. Çак кунсенчех кĕлтесене капана хывса пĕтерес пулать, кунĕн-çĕрĕн авăн çапас ĕçе организацилемелле, çак ĕçре молотилкăсемпе пурнипе те туллин усă курмалла. Государствăна тырпул парас тĕлĕшпе кашни пилĕк кун валли тунă графиксене кашни колхозăн, кашни районăн тултарса пымалла, çапла вара тырпул хатĕрлес ĕçе ноябрĕн 5-мĕш тĕлне пĕтĕмпех вĕçлесе çитерес пулать. Хĕллехи сивĕ кунсем килсе çитиччен юлнă кĕске вăхăтпа çĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсене хатĕрлес тĕлĕшре туллин усă курмалла, йĕтĕн-кантăра йăлтах пуçтарса кĕртсе, ĕçлесе хатĕрлемелле. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленсе çитмелле.

Хĕлле туса ирттермелли агротехникăллă мероприятисем çинчен ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă решение пленум ырларĕ тата райкомсемпе райсовет исполкомĕсене çав решенине пурнăçа кĕртемшкĕн халех тытăнма хушса хăварчĕ.

Колхозсенче тупăшсене валеçес ĕç артель хуçалăхне малалла тĕреклетсе пырассинче пысăк вырăн йышăннине шута илсе, пленум исполкомсен председателĕсене тата райкомсен секретарĕсене хăйсене çак ĕçе ертсе пыма хушса хăварчĕ. Кунта уйрăмăнах колхозсенче обществăллă фондсем тăвасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхма кирлине паллă турĕ.

«Пленум партипе совет организацийĕсене, çĕрĕç органĕсене тата МТС директорĕсене колхозсенче, МТС-семпе совхозсенче пуринче те 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттермешкĕн хатĕрленес ĕçе халех сарса яма хушать. Çакна пурнăçа кĕртнĕ чухне мĕнпур культурăсемпе сортсем тăрăх вăрлăх фончĕсемпе страховой фондсем тăвасси çине, тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисене вырăнти ресурссемпе усă курса вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсасси çине, бригадирсемпе звеньевойсем, трактористсемпе комбайнерсем пулса ĕçлеме хĕрарăмсене суйласа илсе хатĕрлесси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла».

Пленум парторганизацисем умне питех те кирлĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Çав задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă. Можайск, Мало-Ярославец тата Калинин енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулса пынă. Нимĕçсем çапăçăва çĕнĕ чаçсем кĕртсе ярса, пирĕн позицисем çине темиçе хутчен те атакăсем тунă. Пирĕн войскăсем тăшманăн атакисене сирсе янă.

Октябрĕн 20-мĕшĕнче нимĕçсен 19 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

* * *

Фронтăн Ленинград енче çапăçакан пирĕн чаçсем тăшманăн чĕрĕ вăйне тата материаллă чаçне пĕтере-пĕтере пырса, ăна пысăк çухатусем кӳреççĕ. Николаев командирăн участокĕнче юлашки виçĕ кун хушшинче кăна совет артиллерисчĕсем противникăн пехотăна турттарса пыракан 92 автомашинине, артиллерин тата минометсен 10 батарейине, пулеметсен 9 йăвине тата боеприпассен складне пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçри танкистсем çак вăхăт хушшинчех нимĕçсен 9 орудине, виçĕ танкне, минометсен батарейине, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна çити пĕтерсе тăкнă тата противникăн станковăй пулемечĕсене нумай тытса илнĕ. Родин командирăн танкисчĕсем, нимĕçсем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пĕр пункт патне татса кĕрсе, тăшманăн противотанковăй 13 орудине, темиçе йывăр минометне тата 14 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçура фашистсен 400 çынна яхăн пĕтнĕ.

Пирĕн войскăсем тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсене допрос тунă чухне калаçа панисем тата вĕсен çумĕнче тупнă е тытса илнĕ донесенисем Ленинград патне пымалли вырăнсенче нимĕçсем пысăк çухатусем тӳсни нимĕç салтакĕсене вăрçа хирĕç ытларах та ытларах шухăшлаттарма пуçлани çинчен çирĕплетсе параççĕ. Нимĕçсен 93-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-лейтенант Гимман, хăйĕн чаçĕсен вăрçас чун-хавалĕ хытах чакса кайнă май, ятарласа приказ кăларнă, çав приказра вăл «дивизие çитес вăхăтрах улăштарса Германие е Францие яраççĕ текен хыпар дивизире хытах сарăлнă», тесе палăртать тата пур офицерсене те «салтаксене йăнăш шухăшлаттарма тата тарăхтарма çеç пултаракан çавнашкал хыпарсене хирĕç кĕрешме» хушать.

* * *

Темиçе кун хушши ĕнтĕ Грецин çурçĕрти чылай провинцийĕсенче партизансен пысăк выступленийĕсем пулса иртеççĕ. Винтовкăсемпе тата пулеметсемпе хĕçпăшалланнă партизансен йышлă отрячĕсем чылай территоринчи çулсене тытса илнĕ, унта партизансем хуçа пулса тăраççĕ. Çурçĕр Грецире полицейски службинче тăракан Италин оккупациллĕ чаçĕсем партизансен пĕрмаях туса пыракан вăрçине хирĕç тата Греци патриочĕсем тăвакан диверсиллĕ ĕçсене хирĕç кĕрешме пултараймаççĕ. Çурçĕр Грецири лару-тăруран хытах шикленсе ӳкнĕ нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем çав пăлханусене пусарма 5 полк янă. Нимĕç войскисене турттарса пыракан поездсенчен пĕрине Греци патриочĕсем ӳпĕнтерсе янă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

* * *

Оренбург деповĕнчи йывăр составлă поездсене илсе çӳрекен машинистсем октябрĕн пирвайхи декадинче йывăр составлă 90 поезда вырăна çитернĕ, 48 паровоз каяссине перекетлесе хăварнă. Машинист Бабнищев юлташ октябрь уйăхĕнче йывăр составлă 4 поезда илсе кайма обязательство илнĕ пулнă. Çав обязательствăна вăл пĕр декада хушшинчех пурнăçланă. Машинист Озеров юлташ Оренбург—Ак-Балаг участокĕнче нормăран ирттерсе 2.440 тонна тиенĕ поезда 57 минута маларах илсе çитернĕ. Оренбург деповĕнчи рабочисен коллективĕнчен 44 процентĕ хăйсене панă ĕç нормисене 200-шер процент тата ытларах та тултарса пыраççĕ.

Октябрĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пĕтĕм фронтра çапăçусем пулса пынă. Можайск, Мало-Ярославец тата Калинин енĕсенче уйрăмах вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи çапăçусенче тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Çак фронтăн участокĕсенчен пĕринче кăна пилĕк кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн пехота тата танксен чаçĕсем пыра-пыра çапнипе тăшманăн, вилнисемпе аманнисене пĕрле шутласан, 5 пин çын ытла пĕтнĕ. Сомовка ялĕ патĕнче противникăн çапăçу хирĕнче вилнисем 300 çын, арканнă 10 танк, танксене хирĕç пемелли 13 оруди, 6 бронемашина выртса юлнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсене пулăшса пырса, пилĕк кун хушшинче противникăн транспортнăй 327 автомашина, 45 оруди, 10 мотоцикл, продовольстви тата боеприпассем тиенĕ 340 лава тата 2500 салтака çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕç танкĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте красноармеец Трегубов питех те пысăк тавçăрулăхпа паттăрлăх кăтартнă. Гранатăсемпе тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе персе, вăл пĕр çапăçура фашистсен икĕ танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Германие хирĕçле выступленисемпе саботаж тунисем Бельгире массăллăн пулса пыраççĕ. Виçĕ уйăх хушшинче Бельгире Германин çар материалĕсене турттарса пыракан поездсене 125 крушени тунă. Телеграфпа телефон провочĕсене 405 хутчен пăснине палăртнă. Германи çарĕн заказĕсене пурнăçлакан предприятисенче саботаж уйрăмăнах вăйлăн сарăлнă. Антверпен çывăхĕнче çак кунсенче оккупациллĕ войскăсемшĕн ĕçлекен виçĕ завода стройран кăларнă. Боринажра горняксем пĕр пысăк шахтăна шыв кĕртсе янă тата электростанцине пăснă. Бельги патриочĕсем Германие хирĕç кĕрешни оккупантсене питех те шиклентерсе ӳкернĕ. Мĕнпур çĕршывра, уйрăмах çĕркăмрăкĕ кăларакан районсенче, гестапо массăллă ухтарусем тата арестсем туса пырать. Антверпенпа Боринажра юлашки эрне хушшинче 600 çынна ытла арестленĕ. Гестапо хĕсĕрленине хирĕç Бельги патриочĕсем Германие хирĕçле çĕнĕ выступленисем тунипе, Германи салтакĕсене тата офицерĕсене вĕлернипе ответлеççĕ. Октябрĕн 26-мĕшĕнче Антверпенра Бельгин 12 рабочине суд тăваççĕ, вĕсене Германин икĕ офицерне вĕлернĕшĕн айăплаççĕ.

Кашни хулана, кашни яла оборонăн никам çĕнтерейми крепоçĕ туса хурар!

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хĕссе килнине Хĕрлĕ Çар воинĕсем тĕнче халиччен курман хастарлăхпа тăрса çапăçса сире-сире яраççĕ, хамăрăн тăван çĕршыва, унăн хулисемпе ялĕсене, хамăр совет халăхĕн пурнăçĕпе ирĕклĕхне, телейне паттăррăн хӳтĕлеççĕ. Тискер те хĕрхенӳсĕр тăшман малалла хирĕнсе кĕрсе пырать. Вăл çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем хăваласа килет. Тăшман, аманнă тискер-кайăк пекех, енчен енне ывтăнать, кирек мĕнле хакпа та пулин çĕнтерӳ тума, вăхăта кĕскетме васкать, мĕншĕн тесен вăхăт ăна хирĕç ĕçлет. Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем Мускав патне, Донбасс патне, Совет çĕршывĕн ытти пысăк хулисемпе центрĕсем патне шăтарса кĕме тăрăшаççĕ.

Хаяр тапхăра тӳссе ирттерет пирĕн çĕршыв. Пĕтĕм совет халăхĕ хамăрăн тăван çĕршыва хӳтĕлеме тăчĕ. Хаяр испытанин самантĕнче совет çыннисен хăйсен речĕсене татах та таччăнрах пĕтĕçтермелле, ылханлă тăшмана отпор пама хăйсен вăйĕсене татах та ытларах ӳстермелле. Советăн миллионшар çулăмлă патриочĕсем пĕтĕм чĕререн тупа туса çапла калаççĕ: тăван çĕрĕн кашни пусăмне çирĕппĕн тăрса хӳтĕлемелле, тăван хуласемпе ялсемшĕн юлашки сывлăш тухиччен, юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçмалла. Фашистла ирсĕрсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçа паттăр совет çыннисем вилĕмрен хăрамасăр, хăйсен пурнăçĕсене шеллесе тăмасăр тухаççĕ. Совет çыннисем çĕршыври хĕçпăшаллă вăйсен тылне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе пыраççĕ.

Тăшман çиллине шăнараймасăр темĕнле тискер ĕçсем туса хăтланать пулин те, ăна пирĕн тытса чармалла. Урнă пек хĕссе килекен тăшмана çапса хуçмалла. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсен юнлă планĕсене кирек мĕнле пулсан та аркатса ямалла. Вăйсем пирĕн нумай. Пирĕн вăйсемпе резервсем татти-сыпписĕр ӳссе пыраççĕ, малалла та ӳссе пырĕç. Йĕркелĕх, çирĕплĕх, чăтăмлăх—пирĕн çĕнтерĕвĕн никĕсĕ. Совет çыннисем кирек ăçта ĕçлеççĕ пулсан та—фронт çывăхĕнче-и, çывăхри е аякри тылра-и, хулара-и, е ялта-и,—пур çĕрте те вĕсем большевикла чăн-чăн йĕркелĕхлĕ, дисциплинăллă пулнин примерĕсене кăтартса пама тивĕçлĕ.

Тăшман пирĕн ретсене дезорганизацилеме, пирĕн çирĕплĕхе хавшатма пăхать. Тăшман кирек мĕнле ирсĕр ĕç те тума пултарать, чи ирсĕр те ултавлă майсемпе усă курать. Тăшман пирĕн пата шпионсемпе диверсантсем яма, çавăн пекех халăх хушшинче суя хыпарсемпе паника саракан провокаторсене яма хăтланать. Яланах хатĕр тămалла! Революциллĕ сыхăлăха пур енĕпе те ӳстермелле! Революциллĕ çирĕп йĕркелĕхе тытса пырса, совет çыннисем тăшмана пирĕн ретсене пăсма памĕç. Фашистла шпионсене, диверсантсене, тăшман парашютисчĕсене совет çыннисем тата пысăкрах çивĕчлĕхпе тыта-тыта пĕтерсе пырĕç, çак ĕçре вĕсем пирĕн çар влаçĕсене, совет разведкин органĕсене, милицие, рабочисен добровольнăй отрячĕсене хăвăрттăн пулăшу парса пырĕç.

Кашни совет хули, кашни колхозлă ял тăшман пырса кĕрейми оборона крепоçĕсем пулса тăмалла. Кам та кам тăшман провокацине парăнать, кам хăйĕн паникерствипе, хăравçăлăхĕпе оборона ĕçне чăрмантарать, кам тыла дезорганизацилет, çавна çийĕнчех военнăй трибунал сучĕн аллине тытса памалла. Совет халăхĕсен çемьинче паникерсемпе хăравçăсемшĕн вырăн çук.

Большевиксен, партирисен те, партире тăманнисен те, кашни совет çыннин, пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăх çинчен яланах астуса тăрса, тăван çĕршыв оборонине, харпăрхăй хулипе харпăрхăй ялĕн оборонине ывăнма пĕлмесĕр куллен тĕреклетсе пымалла. Хĕçпăшал тытма пултаракан кашни гражданинăн тивĕçлĕхĕ—тăшмана пĕр шеллемесĕр тӳррĕн пыра-пыра çапма, тăшман техникине хирĕç, уйрăмах танксене хирĕç кĕрешме советăн паха хĕçпăшалне лайăх вĕренсе алла илесси пулса тăрать. Всевобучăн çирĕп дисциплинăллă, примерлă боецĕ пулса, çапăçури Хĕрлĕ Çарăн боецĕ пулма, фашистсен нимĕнле чеелĕхĕнчен те, нимĕнле авантюрăллă тактикинчен те хăрама пĕлмен боец пулма вĕренсе хатĕрленмелле! Ĕççыннисен хĕçпăшаллă отрячĕсем, тăшман пырса тапăнма пултаракан кашни хулапа районра тунă халăх ополченийĕн отрячĕсем—Хĕрлĕ Çарăн боевой помощникĕсем пулса тăраççĕ. Харпăрхăй хулине, харпăрхăй ялне хӳтĕлеме, пĕчĕккинчен пуçласа ватти патне çитиччен, мĕнпур граждансем çĕкленмелле.

Тăшман хăратса тăракан хуласем тавра никам пырса кĕрейми укрепленисем, оборона рубежĕсем туса çаврăнар. Тăшман темĕнле хăтланса пăхсан та, вăл пĕр çĕртен тепĕр çĕре темĕнле пыра-пыра ывтăнсан та, пур çĕрте те тăшмана татăклă отпор памалла туса хурар çав укрепленисене. Тăшмана хула çывăхне ямалла мар! Тăшман хулана шăтарса кĕрсен, ăна урамри çапăçусенче пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пымалла, унăн вăйне вĕçĕмрен хавшатса пымалла, кашни урамра, кашни çуртйĕре çирĕп тăрса хӳтĕлемелле.

Ылханлă тăшман нимĕнле ирсĕр те тискер ĕç тăвасси умĕнче те чарăнса тăмасть. Фашистла ирсĕрсем мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахаççĕ, ватă çынсене, хĕрарăмсемпе ачасене пере-пере вĕлереççĕ. Фронтран мĕн чухлĕ çывăхра е аякра тăнипе пăхмасăрах, пур çĕрте те сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçе татах та вăйлăнрах туса пымалла. Ăçта çак ĕçе кăтартуллăн йĕркеленĕ, ăçта революциллĕ боевой йĕркене çирĕп тытса тăраççĕ, ăçта пысăк организованноçпа ĕçлеççĕ,—унта тăшман пирĕн çынсен çирĕплĕхне пĕр минутлăха та иксĕлтерме пултараймасть. Йăваш чунлăхăн, тимсĕрлĕхĕн йĕрĕ те, палли те пулмалла мар, халăха хӳтĕлес, предприятисемпе пурăнмалли çуртйĕрсене хӳтĕлес тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тумалла. Тăшман сывлăшран кирек хăш тĕлте пырса тапăнсан та, ăна паттăррăн сире-сире ямалла.

Пирĕн çĕршыв умне хаяр хăрушлăх тухса тăнă кунсенче кашни совет хули, кашни ял чăн-чăн çар лагерĕ пулса тăмалла. Хамăрăн кашни хула, кашни ял йĕри-тавра кĕрешӳре хăрама пĕлмен боецсен хурçă пек çирĕп стенине тăратса çавăрар.

Одесса çыннисем хăйсен тăван хулишĕн 69 кун хушши геройла тăрса çапăçни, ленинградецсем аслă Ленин хулине тĕнче халиччен курман çирĕплĕхпе хӳтĕлесе тăни пĕтĕм совет халăхĕшĕн паттăрлăхăн аслă примерĕ пулса тăрать. Çав пример мĕнпур совет çыннисене тăшмана хирĕç татах та татăклăнрах отпор пама, Гитлерăн юнлă кĕтĕвĕсене хирĕç татах та хăватлăнрах та хаяррăнрах кĕрешме, çав ирсĕрсене пуçĕпех пĕтерсе тăкиччен кĕрешме хавхалантарма тивĕçлĕ.

Пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çитиччен танксемпе, авиаципе хĕçпăшалланнă тăшмана хирĕç, тискер те ирсĕр тăшмана хирĕç эпир йывăр кĕрешӳ туса пыратпăр. Пирĕн нумайччен, вăйлăн кĕрешме лекет. Умра хаяр испытанисем сахал мар тăраççĕ, çухатусем те сахал мар пулаççĕ. Анчах та пирĕн халăх хăй çĕршывĕн никама пăхăнманлăхне, хăйĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхне вĕçне çитиччен хӳтĕлесе тăма татăклăн тупа тунă. Çĕнтерӳ юлашкинчен пурпĕрех хамăр алăра пулассине пирĕн халăх иксĕлми çирĕп шанса тăрать. Пирĕн çĕнтерӳ кунне çывхартассишĕн хурар хамăрăн пĕтĕм вăя!

Тăшмана çапса аркатма пĕтĕм вăя хурар!

(«ПРАВДА» умстатьи, октябрĕн 21-мĕш).

Тăван çĕршыв оборонин фондне

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Октябрĕн 18-мĕш тĕлне ĕççыннисем оборона фондне 9655 тенкĕ укçан тата 69353 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Вăл шутран Тогаевăри «1-ое августа» колхоз членĕсем 2785 тенкĕ, «Красный воин» колхоз членĕсем 1710 тенкĕ панă.

Çавăн пекех, Аслă Чурачăкри вăтам шкулта ĕçлекен учительсем те оборона фондне 7600 тенкĕлĕх облигацисем хывнă.

В. ВИКТОРОВ.

* * *

КАНАШ. Вăтакас-Тавăш ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан, «Динамо» тата «Париж коммуни» колхозсем гитлерла захватчиксене хирĕç çапăçакан паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшассине ĕçпе пурнăçласа пыраççĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз оборона фондне икĕ сурăх, 13 килограмм пыл пачĕ. Колхозниксем 2000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă. Çавăн пекех, ăшă тумтирсем пухасси те аван пырать. Колхозница Анна Васильева ялсоветне пырса çапла каларĕ:

«Эпĕ боецсем валли ăшă кĕрĕк тума тир тата пĕр кĕренке çăм паратăп»,—терĕ. Васильева колхозницăн упăшки действующи арминче фашистла ирсĕрсене хирĕç çапăçать. Упăшки кайнăранпа вăл пĕр кун та ĕçрен юлман, яланах тăрăшса ĕçленĕ.

Васильева юлташран пример илсе Иванов, Тихонов, Николаев юлташсем те пĕрер тир тата кашни 400 грамм çăм пачĕç. Колхозниксем пурĕ 53,3 килограмм çăм, 82 тир, 25 мăшăр пир тăла т. ыт. пухса панă. **Т. ТУРХАН.**

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. «За коммунизм» колхоз членĕсем оборона фондне çирĕплетме 1,5 тонна ыраш, 1,5 тонна тулă, 2 тонна сĕлĕ тата 15 чăх парса пулăшрĕç. Çавăн пекех вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтирсем хатĕрлесе парас ĕçре те лайăх тĕслĕхсемпе ĕçлесе пыраççĕ.

И. ЗУБКОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăрту сарăлсах пырать

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Аслă Чурачăкри «Красный инвалид» промартель октябрь уйăхĕн малтанхи вунă кун хушшинчи производство программине 492 процент тултарчĕ. 73 çула çитнĕ тир тăвакан мастер Г. Мукин юлташ кулленхи нормăна 260—300 процент тултарса пырать. «Пирĕн халĕ çывăрма пĕлмесĕр ĕçлемелле. Эпир туса кăларнă тирсенчен ирсĕр фашизма хирĕç кĕрешекен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли хăвăртрах ăшă кĕрĕк пиншаксем, çĕлĕксем, алсасем пулччăр»—тет вăл.

Комсомольскри Чайковский ячĕпе тăракан çĕвĕ çĕлекен артель çĕвĕçĕ Е. Лукошкова кулленхи нормăна 120 процент тултарса пырать. Çавăн пекех колхозниксем те ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлессишĕн ăмăртаççĕ. Акă, Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз, Нĕркечри Шмидт ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлесе, çуртыррисене пĕтĕмĕшпех çапса пĕтернĕ. Вутланри «Интернационал» колхоз 1941 çулшăн государствăна аш-какай, çу, çăм, çăмарта, çĕрулми тата тырă парса татнă. «Мăрат» колхоз çĕрулми, тир, аш-какай, çу, çăмарта, Сталин ячĕпе тăракан колхоз аш-какай, ыраш парса татнă. Колхозсем выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе те лайăх туса пыраççĕ. «Красный восток» колхоз кăçал тăватă çĕнĕ вите турĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене валли хĕл каçмалăх утă-улăм, силос хывса хатĕрленĕ. Колхозниксем пур ĕçе те пысăк активлăхпа хутшăнаççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли «Мотор» колхоз 35 тир, 7 мăшăр çăмата, 5 çĕлĕк, 40 мăшăр носки, 14 мăшăр алса панă. Ку ĕç ытти колхозсенче те ăнăçлăн пулса пырать.

В. В.

Ăмăртса ĕçлеççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. Пояндайкинăри «Новая жизнь» колхоз членĕсем аслă Октябрь уявне пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. П. Краснов юлташ комбайнпа кулленех 10 тонна тыран авăн çапать. Выльăх-чĕрлĕх витисене те çак кунсенчех юсаса пĕтереççĕ. Халĕ 35 пуç валли ĕне вити тăваççĕ. Колхозниксем хăйсен килĕсенче çĕрулми тата пахча-çимĕçсем типĕтсе государствăна параççĕ. Чылай колхозниксем укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

С. БАТЬКОВ.

Хĕллене тимлĕн хатĕрленеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Пирĕн районри колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕречетес тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç. Кăçал 9 уйăх хушшинче кăна майракаллă шултăра выльăхсен шучĕ 116 процент, сыснасем 190 процент, сурăхсем 156 процент ӳснĕ. Халĕ 4—5-шер ферма тытакан колхозсем 48 шутланаççĕ. Çак колхозсем выльăхсене хĕл каçарма та начар мар хатĕрленнĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал 1400 лав ытла çулçăллă апат хатĕрлесе хунă, 6000 тонна ытларах силос хывнă. Чылай колхозсем силос хывмалли плана ирттерсе тултарчĕç. Акă, «Двигатель революции» колхоз 140 тонна вырăнне 220 тонна силос хыврĕ, Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 100 тонна вырăнне 150 тонна, «Мурат» колхоз 110 тонна вырăнне 130 тонна, «Пролетарий» колхоз 75 тонна вырăнне 102 тонна силос хывса хăварчĕç. Силос хывас ĕçре комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хастарлăн ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен вăйĕпе 3.750 тонна силос хывнă.

Вăрçă обстановки выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхма хушать. Малта пыракан колхозсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, выльăх апачĕ хатĕрлессине малалла та анлăн туса пыраççĕ. Авăн çапнă чухне итем çинче пухăнакан арпа-пучахсене тата технически культурăсен каяшĕсене йăлтах пухса пыраççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсенче выльăх апачĕсене питĕ типтерсĕр пăхса усраççĕ. Сăмахран, «Коммунар» колхозăн итем çинче выльăхсене çиме юрăхлă апат-çимĕç темĕн чухлех сапаланса выртать. «Дубовка», «Красный маяк» колхозсем халĕ те силос хывмалли плана тултарман.

Выльăхсене лайăх хĕл каçармалли тепĕр услови вăл—витесемпе картасене вăхăтра юсаса ăшăтасси пулать. Ку тĕлĕшпе те сахал мар колхозсем ăнăçлăн ĕçлеççĕ.

П. АРХИПОВ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Таганрог районӗнчи хаяр кӗрешӳ

(«Красная звезда» хаҫатӑн спец. военнӑй корреспонденчӗ).

Фашистла ирсӗрсем Мариуполь хулине тытса илнӗ хыҫҫӑн Таганрог патнелле куҫма тытӑннӑ. Вӗсем, Таганрога пӗрре пырса ҫапнипех тытса илме ӗмӗтленсе, ҫапӑҫӑва пысӑк вӑйсем кӗртсе янӑ.

Анчах та Мариуполь хулине илнӗ хыҫҫӑн иккӗмӗш кунӗнчех нимӗҫсем пирӗн чаҫсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑни ҫине пырса тӑраннӑ. Нимӗҫсем вӑл кунне ҫапӑҫӑва кӗрсе каясшӑнах пулман, анчах унта пулса тухнӑ обстановка вӗсене ирӗксӗрех кӗрешӗве кӗртнӗ. Ҫапӑҫусем темиҫе кун хушши пынӑ. Противник пирӗн укрепленисенчен айккипе иртсе флангран пырса ҫапма хӑтланнӑ, анчах пирӗн оборонӑрисем хытӑ тӑнӑ. Таганрог патне тӳррӗн пырса ҫитес шанчӑка ҫухатнӑ хыҫҫӑн фашистсем хӑйсен войскисене тепӗр хут йӗркеленӗ те, ҫӗнӗ вӑйсем илсе пырса пирӗн чаҫсен сылтӑм флангӗнчен иртсе кайма тытӑннӑ, вӗсем ҫавӑн хыҫҫӑн Таганрог ҫине ҫурҫӗр енчен наступлени тума шухӑшланӑ пулмалла.

Тӑшманӑн ирсӗр шухӑшне сиссе илнӗ, Таганрог ҫине пырса ҫапма палӑртса хунӑ, анчах нимӗҫсем каллех вӑйлӑн хирӗҫ тӑнӑ ҫӗре пырса лекнӗ. Вӑл ҫапӑҫӑва икӗ енчен те пысӑк вӑйсем кӗртсе янӑ. Пирӗн те, вӗсен те пӗр-пӗрин ҫине атакӑсем тума пӑрахман. Противник питӗ лайӑх вырӑн йышӑнса тӑнӑ тата унӑн вӑйӗ ытларах пулнӑ пулсан та, вӑл пысӑк ҫухатусем тӳссе каялла чакнӑ. Пирӗн чаҫсем тӑшмана темиҫе пысӑк ялсенчен хӑваласа кӑларнӑ. Вӑл унта пысӑк ҫухатусем тӳснӗ.

Фашистсем ҫав вӑхӑтра ҫӗнӗ подкрепленисем илсе тӑнӑ. Вӑй пухса ҫитернӗ те, противник каллех Таганрог ҫине наступлени тума тытӑннӑ. Пирӗн чаҫсем тӑшманӑн йыш тӗлӗшӗнчен пысӑк вӑйӗ хӗснипе малтанах хатӗрлесе хунӑ рубежа куҫнӑ.

Майор **Т. КАРПЕНКО.**

Военнӑй трибуналра

Мускав облаҫӗнчи НКВД войскисен военнӑй трибуналӗ, 1-мӗш рангри военюрист А. А. Петров юлташ председатель пулса, ертсе пынипе, Мускав хулинчи Ҫӑмӑл промышленность управленийӗн 2-мӗш №-лӗ атӑ-пушмак фабрикин руководителӗсем пулнӑ ҫынсен ӗҫне пӑхса тухнӑ. Государство пурлӑхне ҫаратас тата Мускавран тухса тарас ӗҫӗн тӗп организаторӗсене фабрика директорне Г. И. Варламова, цех начальникне В. К. Евплова тата технорука В. А. Саранцева военнӑй трибунал, уголовнӑй кодексӑн 58—14 статьи тӑрӑх (контрреволюцилле саботаж) айӑпласа, персе пӑрахмалла тунӑ тата вӗсен пурлӑхӗсене туртса илмелле тунӑ.

Фабрикӑн снабжени начальникне Гершензона, ӗҫпе ӗҫ укҫи отделӗн заведующине Ильина 10 ҫуллӑха хупса лартмалла, вӗсен пурлӑхне туртса илмелле тата ларса тухнӑ хыҫҫӑн 5 ҫул хушши правӑсӑр хӑвармалла тунӑ.

Приговор татӑклӑ тата приговор пирки жалобӑсем йышӑнмаҫҫӗ.

Ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Емпӗрт ялсоветӗнче ҫар ӗҫне вӗренессине аван йӗркеленӗ, унта вуншар военнообязаннӑй вӗренет. Занятисем эрнере 3 кун пулса иртеҫҫӗ. Заняти хыҫҫӑн вӗсем Совет Информаци Бюровӗ пӗлтернисене радиопа итлеҫҫӗ.

Ф. НИКОЛАЕВ.

Танксем пырса ҫапни

ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛАНӐҪ ЕНӖ, октябрӗн 20-мӗш. (ТАСС). Сентябрӗн малтанхи ҫуррийӗнче противникӑн пысӑк чаҫӗсем С. юханшывӗ урлӑ каҫса, С. хулине йышӑнма пултарнӑ. Шыв хӗррипе тата хула йӗри-тавра противник ҫирӗп укрепленисем туса лартнӑ, чылай войскӑсене пӗр ҫӗре пухнӑ. Пирӗн танксен чаҫӗ умне ҫакӑн пек задача лартнӑ: противника вӑл йышӑннӑ позицисенчен хӗссе кӑлармалла, унӑн чӗрӗ вӑйне тата огневой точкисене ҫапса аркатмалла. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме пӗр группа танк уйӑрса панӑ. Ҫав группӑна ертсе пыма танковӑй подразделенин командирне Олиферко капитана тата комиссара старший политрука Бударина хушнӑ. Кӑтартнӑ вӑхӑта танксем атакӑна тухса каймалли позици патне пырса ҫитнӗ. Пӗтӗм ҫула танкистсем тӑшмана асӑрхаттармасӑр иртсе тухнӑ. Сигнал тӑрӑх боецсем тӑшман ҫине атакӑна хӑюллӑн ыткӑннӑ. Противник орудисемпе минометсенчен пит хытӑ персе тӑнӑ пулсан та, танкистсем фашистсен оборонин малтанхи хӗррине татса, хулана ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Тӑшман орудийӗсен, миномечӗсен, пулемечӗсен вучӗ кӗрлесе тӑнӑ пулин те, танкистсем хула урамӗсене виҫӗ хутчен тӗрӗслесе тухнӑ, тӑшманӑн орудисемпе пулеметсен йӑвисене путарса лартнӑ.

Ҫак ҫапӑҫура танкистсем прислугимӗнӗпех 12 оруди, чылай пулеметсен йӑвисене тата тӑшманӑн пурӑнмалли ҫуртсенче тунӑ опорнӑй точкисене нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

Противникӑн С. хули ҫумӗнчи ҫирӗплетнӗ позицисене тата хулана йышӑнса тӑракан уйрӑм чаҫсене сирсе ывӑтнӑ, вӗсем тарма пуҫланӑ. Таракан пехота юханшыв хӗррине ҫитсе шыв урлӑ каҫса хӑтӑласшӑн пулнӑ, анчах пирӗн танксем вӗсем ҫине орудисемпе пулеметсенчен тӑвӑллӑн персе тӑнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн вуншар виллисем выртса юлнӑ.

Ҫак ҫапӑҫура Казаков лейтенант геройсен вилӗмӗпе вилнӗ. Снарядсем тӳрех пырса тивнипе унӑн танкӗ стройран тухнӑ. Сиенленнӗ машинӑна тӑшмансем хупӑрласа илнӗ те, унӑн геройла экипажне ирӗксӗрех пӑрантарма хӑтланнӑ. Танкистсем хирӗҫ персе ответленӗ. Вара нимӗҫсем танк айне минӑсем хурса, танка взрыв туса аркатнӑ. Экипаж составӗнчен танк башнинчи стрелок Кановалов вилӗмрен хӑтӑлса юлнӑ, ӑна та хытах амантнӑ пулнӑ, анчах вӑл ҫапах та юлашки вӑйне пухса хамӑрӑннисем патне ҫитнӗ, Казаков лейтенантӑн геройла вилӗмӗ ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Советӑн ҫӗнӗ йышши танкӗсем ҫак ҫапӑҫу операцийӗсенче хӑйсен пахалӑхне пит лайӑх кӑтартрӗҫ. Вӗсен маневронноҫӗ аван, темле ҫулпа та лайӑх ҫӳреҫҫӗ, вӗсен брони ҫирӗп, снарядсене пӑрӑнмасть. С. юханшывӗ патӗнче танковӑй подразделенисем сахал сиен курни пирӗн танкистсен хӑюлӑхӗнчен тата танксен пахалӑхӗнчен килчӗ.

Подразделени комиссарӗн Бударин юлташӑн танкне 9 снаряд пырса тивнӗ, танк ҫапах та стройран тухман, ҫапӑҫу операцийӗнче вӑйлӑн кӗрешнӗ, хӑйӗн чаҫне чиперех таврӑннӑ. Халь, ҫӑмӑл ремонт тунӑ хыҫҫӑн, танк каллех ҫапӑҫӑва кӗме хатӗр. Ку танк экипажӗ пӗтӗмӗшпех комсомолецсенчен тӑрать. Экипаж членӗсем: Кривоус, Пеккер, Ращупкин тата Овчинников юлташсем партие кӗме заявлени панӑ.

Танковӑй взводӑн командирӗ Задзанидзе лейтенант, ҫапӑҫура хӑюлӑхпа хастарлӑх кӑтартса панӑскер, ҫапла калать: «Манӑн взвод малтанхи ҫапӑҫура пӗр машина та ҫухатмарӗ. Халӗ пур экипажсем те ҫӗнӗрен ҫапӑҫӑва кӗме хатӗр тӑраҫҫӗ».

Старший политрук **Г. БЕСПАЛОВ.**

Столица патӗнчи вӑйлӑ ҫапӑҫусем

ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, октябрӗн 20-мӗш. **(«Правда» спец. военкорӗ).** Пирӗн чаҫсем вӑйлӑ ҫапӑҫусем туса пырса, противникӑн танксемпе пехоти наступлени тунине тытса тӑраҫҫӗ.

Мало-Ярославец районӗнче нимӗҫ танкӗсене хӗвелтухӑҫ енне Б. ялӗ патнелле кӑшт куҫма май килнӗ, вӑл ялтан нимӗҫсене ӗнер хӑваласа кӑларнӑ пулнӑ.

Можайск енче пирӗн чаҫсем, артиллери тӗл персе пулӑшнипе, противника чарса тӑраҫҫӗ.

Хоменко командирӑн чаҫӗсем Н. хулишӗн пиллӗкмӗш кун ӗнтӗ урам хушшисенче ҫапӑҫаҫҫӗ. Пирӗн пехота тата танксем хулана ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ тата кӑнтӑр енчен пырса кӗнӗ те, нимӗҫсем вӑйлӑн персе тӑраҫҫӗ пулсан та, вӗсем хӑйсем йышӑннӑ вырӑнсене тытса тӑраҫҫӗ.

Хӗвеланӑҫ фрончӗн тепӗр участокӗнче ҫапӑҫакан чаҫсем октябрӗн 18-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле нимӗҫсен 30 танкне яхӑн, 40 автомашинине тата 30 мотоциклне пӗтерсе тӑкнӑ.

Октябрӗн 20-мӗшӗнче фашистсен бомбардировщикӗсем, ҫумӑрлӑ тата тӗтреллӗ ҫанталӑка пӑхмасӑрах, фронт ҫывӑхӗнчи объектсем ҫине пырса тапӑнма темиҫе хутчен хӑтланса пӑхнӑ, анчах вӗсен тапӑнӑвӗсем пӗри те ӑнӑҫлӑ пулман тата вӗсем пӑрахса хӑварнӑ бомбӑсем нимӗнле сиен те кӳмен.

П. ЛИДОВ.

Нимӗҫсен психикӑллӑ атаки

Паян Ленинград фронтӗнчи участокӗсенчен пӗринче нимӗҫ пехотин пысӑк колонни пӗтӗм пӳпе ура ҫине тӑрса пирӗн позицисем ҫине атакӑна кӗнӗ. Вӗсен умӗнче оркестр пынӑ, вӑл нимӗҫсен анра-сухра маршне вылянӑ.

Н-ски чаҫӗн Командованийӗ моряксене карап ҫинчен артиллерирен персе тӑма хушнӑ. Линкор «Октябрьская революция» хӑйӗн главнӑй калибрне фашистла ирсӗрсем ҫине тӗллеме задани илнӗ.

Карап ҫинчен перессине ертсе пыракан капитан лейтенант комсомолец Л. Бредун ҫамрӑк коммунистпа А. Забелло штурманпа пӗрле кирлӗ расчетсене хӑвӑрт хатӗрлесе хунӑ. Оруди командирӗсем Хлапов, Шевченко, Зверев, наводчик Попов ҫавтери хӑвӑрт тата пӗр хумханмасӑр ӗҫленӗ. Линкор пурӗ те пӗр минута хушши кӑна вӑйлӑн персе тӑнӑ, ҫапах та унӑн результачӗсем нимӗҫсемшӗн хӑрушӑ пулнӑ.

Пӗрремӗш снаряд тӳрех оркестр ҫине пырса ӳкнӗ, нимӗҫсен каппайчӑк маршӗ чи ҫӳллӗ нотӑсенчен пӗрин ҫинче чарӑнса ларнӑ. Ытти снарядсем противникӑн чӗрӗ вӑйӗсене салатса пӑрахнӑ. Усӗрсен колоннине пӗтерсе тата сапаласа тӑкнӑ.

А. ТАРАСЕНКОВ.

ЛЕНИНГРАД, октябрӗн 20-мӗш.
(Телефонпа).

Пурне те ҫар ӗҫне вӗрентесси

Хӗрлӗ Ҫар валли боевой резерв

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Каҫхине, занятисем пӗтнӗ хыҫҫӑн, военнообязаннӑйсем пурте районри клуба ҫар ӗҫне вӗренме пуҫтарӑнаҫҫӗ.

Ҫар ӗҫне вӗренесси пур отделенисенче те ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах 2-мӗш взвод (командирӗ В. Андреев) палӑрса тӑрать. Ку взводри отделенисем тата уйрӑм боецсем пӗр-пӗрипе ӑмӑртса вӗренеҫҫӗ. 2-мӗш отделенинчи боец Харитонов пур предметпа та отлично вӗренет. Вӑл ҫар ӗҫне вӗрентме пуҫланӑранпа занятисене пӗр сиктермесӗр ҫӳрет. Пӗтӗм вӑйне ҫар ӗҫне вӗренесси ҫине хурать. Занятисенче итлесе ларнипе ҫеҫ мар, пушӑ вӑхӑтра хӑй тӗллӗн те вӗренет. Хаҫат-журналсенче тухакан статьясемпе анлӑн усӑ курать, ҫар ӗҫӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесене ялан вулать. Ӑмӑрту договорне Перепелкин, Воронков, Скворцов, Белкин, Дяткин боецсем те аван пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Халӗ отделенисенче винтовкӑпа противогаза вӗренсе пӗтернӗ. 1-мӗш взводра ку предметсемпе 3 ҫын «отлично», 6 ҫын «хорошо», 2-мӗш отделенинче—3 ҫын «отлично», 10 ҫын «хорошо» паллӑсем, ыттисем пурте «посредственно» илнӗ, «плохо» ҫук. Ҫак кунсенче 3 километрлӑ поход пулса иртрӗ.

Иккӗмӗш взводра та (командирӗ С. Рябин) аван вӗренсе пыракансем нумай. Акӑ, Агапов, Мустарин боецсем пур предметсемпе те отлично вӗренеҫҫӗ. Агапов программӑра кӑтартнисӗр пуҫне аслӑ полководецсен Кутузовӑн, Суворовӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене, фашистла ҫынҫиенсемпе геройла ҫапӑҫакан Хӗрлӗ Ҫарӑн тактикипе приемне тӗплӗн вӗренет.

Вӗренӳре дисциплина ҫирӗп. Боецсен пурин те ҫар ӗҫне вӗренес хастарлӑхӗ пысӑк. Вӗсенчен нумайӗшӗ хӑйсем валли гранатӑсем илнӗ, кӗреҫесем тунӑ. Час-часах боецсем парткабинета кайса ҫар ӗҫне вӗренмелли литературӑсемпе, нагляднӑй пособисемпе усӑ кураҫҫӗ. Унта кашни каҫ политинформацисем пулаҫҫӗ, «Правда» хаҫатӑн умстатьисене вуласа параҫҫӗ.

В. ВИКТОРОВ.

Всевобуча „отлично“ паллӑсемпе вӗҫлерӗҫ

ҪЕРПУ. Камайкассинчи ҫар ӗҫне вӗренме тивӗҫлӗ граждӑнсем Чурачӑкри вӗренӳ пунктне ҫӳрерӗҫ. Вӗренӳн малтанхи кунӗсенчех ӗҫре организованность, дисциплина сисӗнчӗ. Вӗренӳ пунктӗнчи комсомолецсем хӑйсене уйрӑмӑнах примерлӑ тытрӗҫ.

Вӗренекенпе вӗренекен, взводпа взвод хушшинче анлӑн сарса янӑ социализмлӑ ӑмӑрту вӗренӳре чылай пулӑшрӗ. 110 сехетлӗ программӑна вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн, 1-мӗш взвод мала тухни палӑрчӗ. Камайкассинчи С. Клементьев, К. Карпов, В. Львов, Г. Иванов комсомолецсем вӗренӗве «отлично» паллӑсемпе вӗҫлерӗҫ.

Г. ИВАНОВ.

Пионерсем ПВХО значокне илнӗ

КАЛИНИНО. Асакассинчи туллимар вӑтам шкулта К. Куликова учительница ертсе пынипе ҫак кунсенче пионерсем 50 ача ытла ПВХО нормисене парса значоксене алла илчӗҫ. Вӗсенчен И. Орлов, Л. Пантелеймонов, С. Сверчков, Н. Капитанов тата ытти чылай пионерсем нормӑсене отлично пачӗҫ.

Халӗ пионерсем хӑйсен ашшӗ-амӑшӗсене тата ытти колхозниксене сывлӑшран тата химиллӗ тапӑнуран сыхланма вӗрентме обязательствӑсем илчӗҫ

Б. ШОРНИКОВ.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе вӑйлатса пыратпӑр

Парторганизацисен хальхи вӑхӑтри задачи вӑл — тыла ҫирӗплетесси, предприятисене, учрежденисене, колхозсене пурне те кирек мӗнле условисенче те пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттересси пулса тӑрать. Парторганизацисен партипе правительство заданийӗсене вӑхӑтра пурнӑҫлас тата государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен тултарас ҫӗрте хуҫалӑх руководителӗсене кулленех тивӗҫлӗ пулӑшу парса пымалла.

Пуҫламӗш парторганизацисен ӗҫсыннисен политикӑллӑ тата ӗҫри ҫекленӗвне организацилесе ертсе пымалла, рабочисемпе колхозниксене, интеллигенцие пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫлеме вӗрентсе пырас пулать. Малта пыракан колхозсенчи парторганизацисем ҫапла тӑваҫҫӗ те. Вӗсем партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫсене хуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса пыраҫҫӗ, халӑх хушшинчи массӑллӑ агитаци ӗҫне пӗр самантлӑха та вӑйсӑрлатмаҫҫӗ. Ҫавнашкал парторганизацисем вӗсем пӗтӗм ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетмелле тесе Сталин юлташ кӑтартса панине тӗрӗс ӑнланса илнӗ. Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Новая жизнь», «Память Ленина», «Агроном» колхозсенчи пуҫламӗш парторганизацисем вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех хӑйсен ӗҫӗсене урӑхлатса ҫӗнетрӗҫ, вӗсем колхозниксен ӗҫри пысӑк ҫекленӗвӗпе хастарлӑхне колхоз производстви умӗнче тӑракан задачӑсене вӑхӑтра пурнӑҫлас енӗпе организацилесе ертсе пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пек туни колхозсене ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсене вӑхӑтра туса пыма пулӑшнӑ.

Партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе хуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса пыни районра халиччен юлса пынӑ колхозсене малти рете тухма май пачӗ. Сӑмахран, «Великан» колхоз членӗсем кӑҫал нихӑҫанхинчен пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлерӗҫ. Колхозниксем, ҫӗршыв умӗнчи пӗтӗм ответлӑха туйса, ирттен пуҫласа каҫчен, тӗттӗм пуличчен ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн районра пурӗ 30 агитпункт ӗҫлет. «Сталь» колхозри агитаторсен группи колхозниксем хушшинче тӑтӑшах докладсемпе калаҫусем ирттерет. Агитаци ӗҫне лайӑх туса пыни колхозниксен ӗҫри хастарлӑхне ӳстерчӗ, кашни колхозник пикенсе ӗҫлеме тӑрӑшать. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас тӗлӗшпе те пысӑк ӗҫ туса пырать.

«Профинтерн» колхозра та агитаторсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен пӗтӗм ӗҫне фронт интересӗсене пӑхӑнтарса туса пыраҫҫӗ. «Профинтерн» колхоз тата колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли 32 мӑшӑр ҫӑматӑ, 22,5 килограмм ҫӑм, 52 тир, 3 кӗрӗк пиншак тата ытти япаласем нумай пухса панӑ. Массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркеленӗ ҫӗрте пур ӗҫ те ӑнӑҫлӑн пырать. «Крестьянин» колхоз членӗ Воронцова юлташ колхозниксен пухӑвӗнче: «Манӑн икӗ ывӑл фронтра, эпӗ тӑван боецсем валли 7 тир паратӑп», тенӗ. Ҫапла вара Воронцова юлташ ыттисене пример кӑтартнӑ. Ун хыҫҫӑн колхозниксем ҫак ӗҫе активлӑн хутшӑннӑ. Кун пек примерсем нумай илсе кӑтартма пулать.

Районри ӗҫсыннисем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли пурӗ 2.910 тир, 1.060 килограмм ҫӑм, 257 ҫӗлӗк, 83 чӑлха, 146 кӗпе тата ытти япаласем пухса пачӗҫ.

Комсомолецсемпе ҫамрӑксем те оборонӑна ҫирӗплетес тӗлӗшпе пархатарлӑ ӗҫсем туса пыраҫҫӗ. Ҫамрӑксем туса ирттернӗ воскресникӗсем пирӗн халӑх хӑйӗн ҫарне пулӑшма яланах хатӗр тӑнине татах тепӗр хут кӑтартса пачӗҫ. Августӑн 17-мӗшӗнче пулнӑ воскресника пирӗн районра 11.944 ҫын, сентябрӗн 7-мӗшӗнче 9.000 ҫын хутшӑннӑ. Ӗҫсыннисем вӑл кун оборона фондне ҫӗршер центнер тырӑ, пахча-ҫимӗҫсем тата укҫан чылай хывнӑ.

Анчах эпир ку таранччен тунӑ ӗҫсем ҫинче лӑпланса ларма пултараймастпӑр. Пирӗн партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе нихӑҫанхинчен вӑйлӑ туса пымалла. Районра юлса пыракан колхозсем те ҫук мар. Пирӗн вӗсене малта пыракансен ретне илсе тухмалла. Хӑшпӗр колхозсенче опытлӑ счетоводсем ҫук пирки учетпа отчет ӗҫне начарлатнӑ. Ҫакна шута илсе, Хӗрлӗ Ҫар ретне тухса кайнӑ счетоводсем вырӑнне колхозсем валли ҫӗнӗрен счетоводсем хатӗрлеме районра курс организациленӗ. Вӑл курсра 67 ҫын вӗренет, вӗсенчен чылайӗшӗ хӗрачасем.

Ҫакна та палӑртса хӑвармалла. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑн ВКП(б) райкомӗ малта пыракан ҫынсене парти ретне илес тӗлӗшпе ӗҫлессине хавшатрӗ. ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫак йӑнӑша вӑхӑтра кӑтартса пачӗ, халӗ эпир ӑна тӳрлетсе пыратпӑр.

Халӑха ҫар ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе те пирӗн малашне ытларах ӗҫлемелле пулать. Уйрӑмах всевобуч подразделенийӗсенче политикӑллӑ ӗҫе вӑйлатас пулать. Всевобуч мӗнле пыни ҫинчен райком бюровӗ икӗ хут ыйту лартса сӳтсе-яврӗ тата ку тӗлӗшпе тивӗҫлӗ ӗҫсем тума палӑртнӑ. Ку енӗпе пирӗн малашне те пикенсех ӗҫлемелле. Хӗрлӗ Ҫар валли пур енӗпе те тӗплӗн хатӗрленсе ҫитнӗ боецсем хатӗрлесе парас ӗҫре парторганизацин куллен пулӑшса пымалла.

М. КУЗЬМИН.

ВКП(б) Хӗрлӗ Чутай райкомӗн секретарӗ.

Докладчиксен групписем ҫинчен

Ленин—Сталин партийӗ политикӑллӑ агитаци ӗҫне, большевикла агитаторсене вӗрентсе ҫитӗнтерес ӗҫе яланах пысӑк вырӑна хурать, ҫав ӗҫсем ҫине тимлӗн пӑхать. Отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ тапхӑрта массӑллӑ агитаци тата большевикла пропаганда енӗпе уйрӑмах пысӑк задачӑсем тухса тӑчӗҫ.

Республикӑра парторганизацисем чылайӗшӗ хӑйсен ӗҫне урӑхлатса ҫӗнетрӗҫ, вӗсем агитаципе пропаганда ӗҫне отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи задачӑсене майлӑ туса пыма тытӑнчӗҫ. Агитаторсен ретне ҫӗнӗрен вуншар, ҫӗршер ҫын тӑрса ҫак ответлӑ ӗҫе чыслӑн туса пыма тытӑнчӗҫ. ВКП(б) райкомӗсем ҫумӗнче докладчиксен групписем тунӑ. Ҫав группӑсем районри партипе совет активӗсенчен тӑраҫҫӗ. Докладчиксен групписем нумайӗшӗ паха примерсем кӑтартаҫҫӗ.

ВКП(б) Калинински райкомӗ ҫумӗнчи докладчиксен группи иртнӗ виҫӗ уйӑх хушшинче колхозсемпе учрежденисенче докладсемпе калаҫусем 313 хут туса ирттернӗ. Кунта агитаци ӗҫне ВКП(б) райкомӗн секретарӗсем хӑйсем активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Кудряшов юлташ хӑй кӑна 15 доклад туса панӑ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи докладчиксен группи те аван ӗҫлет. Кунта та ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Борзов юлташ ҫак ӗҫе активлӑн хутшӑнать. ВКП(б) райкомӗнче ӗҫлекен работниксем ӗҫсыннисене политикӑллӑ докладсем туса парса, вӑл докладсене район умӗнче тӑракан задачӑсемпе ҫыхӑнтарса, ӗҫсыннисен сарлака массисене государство умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра тултарас ӗҫе мобилизацилеҫҫӗ.

Ҫаксемпе пӗрлех хӑшпӗр райкомсем ҫумӗнчи группӑсем ку тарана ҫитсе те хӑйсен активлӑхне кӑтартайман-ха. ВКП(б) Йӗпреҫ райкомӗ ҫумӗнчи группа икӗ уйӑх хушшинче те 38 доклад ҫеҫ туса панӑ. Докладчиксен группинче тӑракансенчен 26 ҫын докладсем туса парас ӗҫе пӗрре те хутшӑнман. Райком секретарӗсем агитаци ыйтӑвӗсемпе сахал интересленнӗ, вӗсем ку ӗҫре хӑйсем пример кӑтартмаҫҫӗ. Хӑшпӗр райкомсен секретарӗсем канашлусем, ларусем туса ирттернипех лӑпланса лараҫҫӗ, вӗсем политикӑллӑ агитаци ӗҫӗ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанаҫҫӗ.

Парторганизацисен руководителӗсем хӑйсем ҫак ӗҫе активлӑн хутшӑнма тивӗҫ. Агитаци ӗҫне вырӑнти фактсемпе ҫыхӑнтарса пыма райкомсен пур майсем те ҫителӗклӗ, ӗҫе чӑннипех пикенсе тӑвас кӑмӑл ҫеҫ кирлӗ. Парторганизацисен руководителӗсен агитаторсене куллен пулӑшса тата вӗрентсе пымалла.

ВКП(б) Обкомӗн нумаях пулмасть пулса иртнӗ пленумӗ парторганизацисем партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫсене ҫителӗксӗр туса пынине палӑртрӗ, ҫак ӗҫе вӑйлатма конкретнӑй кӑтартусем парса хӑварчӗ. Политикӑллӑ агитаци ӗҫне вӑйлатас ҫӗрте докладчиксен групписене тӗреклетни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӗсене пирӗн квалификациллӗ докладчиксемпе агитаторсене явӑҫтарса тӗреклетмелле.

Парторганизацисен партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе куллен туса пымалла, массӑпа ҫыхӑнса ӗҫлессине ҫирӗплетмелле. Ҫав ҫыхӑнӑва ҫирӗплетни ирсӗр тӑшмана вӑйлӑнрах пырса ҫапма май парӗ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Ялхуҫалӑх ҫулӗн хӑшпӗр итогӗсем

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлемелле туни колхозниксемпе колхозницӑсен ӗҫ тухӑҫлӑхне темиҫе хут ӳстерчӗ. Колхозниксем пӗтӗм вӑй-хала тырпул тухӑҫне ӳстерес тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне хӑпартас ӗҫе хурса ӗҫлерӗҫ. Пирӗн район иртнӗ ҫуракине нихӑҫанхи пек мар кӗске срокра тата пысӑк пахалӑхпа туса хӑварчӗ. Ҫак пархатарлӑ ӗҫсемшӗн пирӗн район тата МТС куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялава илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Колхозсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тӑрӑшса туса пынине пула тырпулсене те вӑхӑтра пухса кӗртрӗмӗр. Вуншар колхозсем тата бригадӑсем вӑйлӑ тырпул туса илчӗҫ. «Ҫӑлтӑр», «Кзыл-Тан», «Канаш», «Маяк», «РОКК», Ворошилов тата Чкалов ячӗсемпе тӑракан колхозсем гектартан вӑтам шутпа 100-шер пӑт тӗштырӑ пухса кӗртнӗ. Уйрӑм бригадӑсемпе звеносем унтан та ытларах тырпул пухса кӗртнӗ. «Маяк» колхозри иккӗмӗш бригада (бригадирӗ Латыпов) 28,63 гектар ҫинчен 24,5-шер центнер сӗлӗ туса илнӗ. Ҫак бригадӑн пӗтӗм культурӑсем тӑрӑх вӑтам шутпа гектартан 18 центнер тырӑ тухнӑ. Латыпов бригадинчи виҫҫӗмӗш звено (звеньевойӗ З. Салихова) хӑй ҫумне ҫирӗплетсе панӑ 18 гектар ҫинчен 19-шер центнер тӗштырӑ туса илнӗ.

«Ҫӑлтӑр» колхозри 5-мӗш бригада (бригадирӗ Н. Горшков) кашни гектар ҫинчен 19,8 центнер ыраш, 25-шер центнер сӗлӗ, 12 центнер вир, 10-шар центнер пӑрҫа пухса кӗртнӗ. Ҫак бригада планран ирттерсе 548 центнер тӗштырӑ туса илнӗ.

Колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени тырпул тухӑҫне хӑпартма кӑна мар, технически культурӑсемпе ҫӗрулми тата пахча-ҫимӗҫсен тухӑҫне хӑпартма та пулӑшрӗ. Нариманов ячӗпе тӑракан колхоз гектартан 160 центнер ҫӗрулми, 5-шер центнер сӳс туса илнӗ. «Ҫӑлтӑр» колхозӑн пахча-ҫимӗҫ бригади гектартан 220-шер центнер хӑяр, 240-шер центнер купӑста туса илнӗ. Ҫавӑн пекех сухан, помидор т. ыт. ҫимӗҫсем гартса тума панӑ плансене те ытлашшипех пурнӑҫланӑ.

Роза Люксембург ячӗпе тӑракан колхоз членӗ Думилина юлташ колхозра 186 кун ӗҫлесе 236 ӗҫкунӗ тунӑ. Ҫакӑншӑн вӑл 1180 килограмм тырӑ илет. Кунсӑр пуҫне тата лайӑх ӗҫленӗшӗн ӗҫкунӗ ҫумне хушса 136 килограмм тырӑ параҫҫӗ. Ҫак колхозри тепӗр колхозник уйхир ӗҫӗнче ӗҫлесе 282 ӗҫкунӗ тунӑ. Ҫакӑншӑн ӑна 90 пӑт тырӑ параҫҫӗ тата ҫӗнӗ закон тӑрӑх 10 пӑт хушса параҫҫӗ.

«Маяк» колхозри 4-мӗш бригада членӗ Рахиме Сафиуллина юлташ 210 ӗҫкунӗ ӗҫлесе 1260 килограмм тӗштырӑ илет. Кунсӑр пуҫне ӑна ӗҫшӗн хушса тепӗр 252 килограмм тырӑ параҫҫӗ. Ҫавӑн пек тӗслӗхсем пирӗн районра ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ.

Пирӗн район тырпулпа кӑна мар пуян. Колхозсем халь карта тулли выльӑх-чӗрлӗх усрама пуҫларӗҫ. Вӗсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхрен ҫулленех пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Колхозсенчи сӗт-ҫу фермисенчен саккӑрӗшӗ сӗт суса илмелли плана 9 уйӑх хушшинчех тултарчӗҫ. 30 фермӑран 14 ферми сурӑхсенчен ҫӑм касса илмелли плана ирттерсе тултарнӑ. Ҫак фермӑсенче ӗҫлекен 15 колхозница ҫӗнӗ закон тӑрӑх 30 килограмм ҫӑм илеҫҫӗ. Сталин ячӗпе тӑракан колхозри Алексей Толстов юлташ планпа пӑхнинчен ирттерсе 30 килограмм ҫӑм касса илнӗ. Ҫавӑншӑн ӑна ӗҫкунӗ ҫумне хушса 3 килограмм ҫӑм панӑ. Вӑлах путексем пӑхса ӳстермелли плана ирттерсе тултарнӑ. Толстов юлташӑн план тӑрӑх 57 путек пӑхса ӳстермелле пулнӑ, вӑл 74 путек ӳстернӗ. Ҫакӑншӑн вӑл 4 тир илнӗ.

Молотов ячӗпе тӑракан колхозри чӑх-чӗпсем пӑхакан Анна Малинина юлташ планран ирттерсе 1.494 ҫӑмарта илнӗ, ҫавӑншӑн ӑна ӗҫкунӗ ҫумне хушса 224 ҫӑмарта панӑ.

Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тунӑ вӑхӑтра колхозсенчи пуҫламӗш парторганизацисем пысӑк тимлӗхпе ӗҫлерӗҫ. Пӗтӗм йывӑрлӑха вӗсем хӑйсем ҫине илсе пычӗҫ. «Маяк» колхозри пуҫламӗш парторганизаци (секретарӗ Минаев юлташ, вӑлах колхоз председателӗ пулса ӗҫлет) колхозри пӗтӗм ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек организацилесе пычӗ. Тырпулсене пуҫтарса кӗртнӗ чухне кирлӗ машинӑсене, инвентарьсене малтанах юсаса хатӗрленӗ пулнӑ. Вырма тухнӑ кунранах ӗҫлеме пултаракан пур колхозниксем те ӗҫе тухнӑ. Колхозниксем хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне анлӑн туса пынӑ, ҫавӑнпа пур ӗҫсем те вӑхӑтра пулса пычӗҫ. Машиновед Кадир Халиков юлташӑн кунне 6 гектар вырмалла пулнӑ пулсан, вӑл 8—9 гектар таран вырнӑ. 65 ҫулхи колхозница С. Аббарова юлташ кулленех 0,13 гектар тырӑ вырнӑ. Рахиме Сафиуллина юлташӑн кунне 0,20 гектар ҫинчи тырра кӗлтене ҫыхмалла пулнӑ пулсан, вӑл ӑна 150 процент ытла тултарса пынӑ.

Колхозсенчи пуҫламӗш парторганизацисем политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе сарса пынине пула колхозниксем хушшинче двухсотниксен движенийӗ анлӑн сарӑлса кайрӗ. Нариманов ячӗпе тӑракан колхозри комсомолка, райсовет исполкомӗн депутачӗ С. Шарафутдинова юлташ кунне 350 кӗлте ҫыхас вырӑнне 700-шер кӗлте ҫыхса пынӑ. Шарафутдинова юлташран курса ытти колхозницӑсем те ӗҫ нормине 200 процент тултарма пуҫланӑ. Колхоз кӗрхипе ҫурхи культурӑсене 12 кун хушшинче йӑлтах пуҫтарса кӗртнӗ.

Пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ Булатов юлташ ертсе пыракан «Красный Октябрь» колхоз кӗрхипе ҫурхи культурӑсене 7 кун хушшинче пуҫтарса кӗртнӗ.

Пирӗн район кӑҫал ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пысӑк хӑвӑртлӑхпа туса пырать. Апла пулин те ҫакна паллӑ туса хӑварни кирлӗ. Тырпула пуҫтарса кӗртнӗ вӑхӑтра тата ялхуҫалӑхӗн ытти ӗҫӗсене тунӑ чухне хӑшпӗр ҫитменлӗхсем те пулкаларӗҫ. Чылай колхозсенче авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ тӑратас ӗҫсем юлса пыраҫҫӗ. Пирӗн район тырпул обязательствин планне тултарса ҫитереймен. Халӗ ҫак ҫитменлӗхе хӑвӑрт тӳрлетсе пыратпӑр. Ҫитес кунсенчех авӑн ҫапас ӗҫе тата государствӑна тырпул тӑратмалли плана тултарас тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнтӑмӑр. Халӗ авӑн ҫапнӑ ҫӗрте 33 молотилка ӗҫлеҫҫӗ. Пур колхозсенче те талӑкӗпех авӑн ҫапассине организациленӗ.

Уй ӗҫӗсене тунӑ вӑхӑтрах ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешсе пынӑ. Колхозсем кӗрхи тырӑсене планпа пӑхнинчен ирттерсе 8.445 гектар акса хӑварнӑ. Пирӗн район кӑҫал пуҫласа вуншар гектар ҫине кок-сагыз акса хӑварать.

Октябрӗн 15-мӗшне районӗпе 4.298 гектар кӗрхи ҫӗртме тунӑ. Тӳрех калас пулать, ку енӗпе эпир кая юлнӑ.

Аслӑ Октябрь уявӗ ҫывхарса килнӗ май, колхозсенче халь социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса пырать. Кашни колхоз аслӑ уява ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пӗтӗмпех вӗҫленипе тата государство умӗнчи обязательствӑсене тултарнипе кӗтсе илессишӗн кӗрешет. Пирӗн задача—колхозниксен патриотла движенине ертсе пырса, авӑн ҫапассипе государствӑна тырпул тӑратас ӗҫсене хӑвӑрт вӗҫлеме пулӑшасси пулать. Ҫак задачӑсене Чкаловски районри колхозниксем ӑнӑҫлӑн тултарасса шансах тӑратпӑр.

ВАЛЕЕВ,

ВКП(б) Чкаловски райкомӗн секретарӗ.

Октябрь уявĕ тĕлне заем укçине пухса çитерер

ЙĔПРЕÇ. Районри заем уполномоченнăйĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн укçа-тенкĕ пухас ĕç пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пыма пуçларĕ.

Заем укçи пухас ĕçе Кировски ялсоветĕнче (председателĕ Эдричев) уйрăмах лайăх организациленĕ. Заем уполномоченнăйĕсем З. Алексеев, С. Иванов, М. Степанов тата ытти юлташсем те тăрăшса ĕçленипе заем укçине пĕтĕмĕшпех пухса çитерне. Буинск поселок совечĕ (председателĕ Волков) виççĕмĕш кварталта пухмалли заем укçи пухас плана 131 процент пурнăçланă. Заем уполномоченнăйĕсенчен уйрăмăнах çамрăк хĕрача, комсомолка Мария Мельникова аван ĕçленине палăртмалла. Вăл хăйĕн участокĕнче 2410 тенкĕлĕх заем сарнă пулсан, укçине октябрĕн 1-мĕш тĕлне пухса пĕтерне. Халĕ вăл фронта кайнă уполномоченнăй участокĕнче ĕçлет, вăл çак участокра кĕске вăхăтрах 700 тенкĕ ытла заем укçи пухнă. Халĕ Октябрь уявĕ тĕлне заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерме тăрăшать.

Заем укçи пухассипе Йĕпреç поселок совечĕ (председателĕ Шишикин), Йĕпреç, Савка ялсовечĕсем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем виççĕмĕш кварталти плана 102—106 процент пурнăçланă. Йĕпреç ялсоветне кĕрекен «Красный Октябрь» колхоз членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн Н. Смолов, Г. Иванов, И. Матвеев, А. Шуйкова, А. Архипова т. ыт. колхозниксем те заем укçисене пĕтĕмпех тÿлесе татрĕç. Заем уполномоченнăйĕ Семен Шухеев Октябрь уявĕ тĕлне заем укçине пухса пĕтерес тĕлĕшпе Крупская ячĕпе тăракан колхозри заем уполномоченнăйĕпе Иван Герасимовпа ăмăртса ĕçлет. Ăмăртура С. Шухеев малта пырать, вăл ăмăртăва хутшăннă хыççăн заем укçине 700 тенкĕ ытла пухнă та ĕнтĕ.

«Путиловка» колхоз членĕсем те пурте тенĕ пекех çĕнĕ заема 100—200-шер тенкĕрен кая мар çыраннă, паянхи куна пурĕ 3500 тенкĕ пухса панă.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн чылай уполномоченнăйсем хăйсен ĕçĕсене вăйлатрĕç, анчах вĕсен хушшинче паянхи кун та ăмăртăва хутшăнман тата начар ĕçлекен уполномоченнăйсем те пур-ха. Районри перекет касси вĕсене ăмăртăва явăçтарас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемест. Эпеç ялсоветĕнче октябрĕн малтанхи çурuйăхĕнче заем укçине пĕр пус та пухман. Çакнашкал кая юлса пыракан ялсовечĕсен, малта пыраксенчен пример илсе, заем укçи пухас ĕçе вăйлатмалла. Октябрь уявĕ тĕлне заем укçине пухса пĕтерессишĕн кĕрешмелле.

Д. М.

Парăмсене тÿлесе татрĕç

ЕТĔРНЕ. Чурпай ялсоветне кĕрекен колхозсем государство умĕнчи 1941 çулти укçа-тенкĕ парăмне срокчĕнех тÿлесе татма тăрăшаççĕ. Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем комсомолец И. Никифоров, А. Изоркин, бригадир Г. Скворцов юлташсем, Урапакассинчи «Правда» колхоз членĕсем П. Ефимов, М. Ядровкин тата ытти юлташсем те укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тÿлесе татнă. Колхозниксемпе единоличниксем Октябрь уявне укçа-тенкĕ парăмĕсене пĕтĕмпех тÿлесе татнипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

М. ДАНГЕР.

МТС валли кадрсем хатĕрлесси çине тимлĕн пăхмалла

Пирĕн республикăри машинно-тракторнăй станцисенче трактористка, комбайнерка тата вĕсен помощникĕсем пулса 700 хĕрарăма яхăн ĕçлеççĕ. Апла пулин те хĕрарăмсенчен кадрсем вĕрентсе хатĕрлессишĕн куллен ĕçлени кирлĕ. Иртнĕ çулсенче Куславкка, Çĕрпÿ, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи МТС руководителĕсем механизаторла кадрсем хатĕрлес ĕç çине питех те çиелтен пăхнă. Çак çитменлĕхе кăçал республикăри пур машинно-тракторнăй станцисен те шута илмелле. Кашни МТС хăйне валли кирлĕ кадрсене вырăнтах вĕрентсе хатĕрлемелле. Ку тĕлĕшпе хăшпĕр МТС директорĕсем ĕçлеме тытăнчĕç ĕтнĕ. Етĕрне МТС-че халь трактористка пулма 13 хĕрарăм вĕренеççĕ. Комсомольскинчи МТС-ра 43 хĕрарăма вĕрентеççĕ.

Çав вăхăтрах Красноармейскипе Шăхасан МТ Станцийĕсен руководителĕсем ку тĕлĕшпе халь нимĕнле ĕç те туман-ха.

Пирĕн машинно-тракторнăй станцисенчи кадрсене иртнĕ çулсенче вĕрентсе хатĕрленĕ çынсен шучĕпе те ÿстерсе пыма май пур. Иртнĕ икĕ çул хушшинче хĕрарăмсенчен сахал мар трактористкăсем тата комбайнеркăсем хатĕрленĕ. Çав кадрсемпе халь пĕтĕмĕшпех усă курас пулать. Вăрмарти МТС икĕ çул хушшинче 63 хĕрарăма трактористка пулса ĕçлеме вĕрентсе хатĕрленĕ пулнă. Вĕсенчен халь мĕнпурĕ те 22 хĕрарăм кăна машинно-тракторнăй станцинче ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Шупашкар районĕнчи машинно-тракторнăй станцийĕ те 104 хĕрарăм таран тракторпа ĕçлеме вĕрентсе хатĕрленĕ пулнă. Анчах вĕрентсе хатĕрленĕ кадрсене вăхăтра ĕçе çирĕплетмен пирки, вĕсем саланса кайнă. Халĕ хĕрарăмсенчен пĕтĕмпе те 13 трактористка кăна тăрса юлнă. МТС директорĕсем трактористкăсене ĕçе çителĕксĕр явăçтараççĕ. Тепĕр чухне вĕсем машинăна хĕрарăмсене шанса пама та хăраса тăраççĕ. Çавна пула хĕрарăмсенчен кадрсем хатĕрлесси вăраххăн пулса пырать.

МТС валли трактористсем хатĕрлеме халех тытăнас пулать. Ку ĕçе чи малтан комсомолкăсене тата союзра тăман çамрăк хĕрачасене явăçтармалла.

Тракторист е комбайнер фронта тухса кайиччен хăйĕн вырăнне хăварма çĕнĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлет пулсан, ăна мухтамалла. Çак ĕçрен механиксемпе бригадирсен те аякра тăмалла мар. Вĕренме тытăниччен тракторсемпе комбайнсем çумне çирĕплетнĕ хĕрарăмсене пухса тракторпа комбайн чаçĕсем çинчен ик-виçĕ калаçу туса ирттерни усăллă пулмалла. Механиксемпе бригадирсем вĕренÿри пĕтĕм ĕçсене тÿррĕмĕнех тĕрĕслесе тăмалла. Вĕсен кашни ученик мĕнле ăнланса илнипе интересленес пулать тата малалла вĕренме заданисем парса тăмалла. МТС директорĕсем çамрăк кадрсене çине тăрса вĕрентсе хатĕрлекен трактористсемпе комбайнерсене пур майпа та хавхалантарса пыма тивĕç.

Трактористкăсене опытлă трактористсем çумне çирĕплетсе вĕрентнисĕр пуçне, халех стационарнăй курссенче вĕрентме çынсем илсе хатĕрлес пулать. Шкул çурчĕсене вăхăтра юсаттармалла, вут-шанкăсем хатĕрлемелле. Çавăн пекех, вĕренекенсем валли халех апат-çимĕçсем хатĕрлесе хуни кирлĕ. Иртнĕ çулхине Çĕрпÿри МТС курсантсем валли кăмакасăр пÿлĕм уйăрса панă пулнă. Курсантсем вара занятинче те тăлăпсемпе ларнă. Çакнашкал çитменлĕхсем кăçал пачах пулмалла мар. Шкулсемпе курссем валли таса, ăшă тата çутă çуртсем уйăрса памалла. Çакăншăн чи малтан МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсем е старший механиксем ответлă.

Механизаторсен курсĕнче вĕренме чи малтан МТС çумĕнчи кĕске срoклă курссенче вĕреннĕ хĕрарăмсене илес пулать. Кунта вĕсем трактор пайĕсене кăна мар, вĕсене мĕнле юсамаллине те вĕренмелле.

Л. БЫРЕНКО.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн кадрсен пайĕн начальникĕ.

Тракторсене юсама тытăннă

ÇĔРПУ. Машинно-тракторнăй станцин килес çулхи сезон валли 59 трактор юсаса хатĕрлемелле. Вăл шутран октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче 9 трактор юсаса кăлармалла. МТ Станци тракторсене юсама октябрĕн 13-мĕшĕнче тытăннă. Ку ĕçре 3 механик, 2 слесарь тата пĕр токарь ĕçлеççĕ.

Машинно-тракторнăй станци тракторсене юсама малтанах хатĕрленсе пынă. Мастерской цехĕсене тахçанах юсаса хатĕрленĕ. Станоксемпе инструментсем, заправочнăй материалсем çителĕклĕ. Мастерскойра ĕçлекен работниксем валли общежити хатĕрленĕ. Тракторсене юсанă чухне ытларах вырăнти материалсемпе усă курма тăрăшатпăр.

З. БАРАНОВ.
МТС директорĕ.

Витесене хатĕрлесе çитернĕ

ЙĔПРЕÇ. Районри пур колхозсенче те обществăллă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма апат-çимĕç тата ăшă витесемпе картасем хатĕрленине тĕрĕслеме тытăннă. «Эконом» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех пурнăçланă. Мăйракаллă шултăра выльăхсем тĕлĕшпе плана 123,5 процент, лаша выльăхсемпе—117,5 процент, сурăхсемпе—137,5 процент, чăхчĕп ĕрчетессипе 200 процент тултарнă. Колхоз выльăх витисене пĕтĕмпех юсаса хатĕрленĕ. Кăçал пухса кĕртнĕ утăран лашасемпе ĕнесем тата сурăхсем валли 585 центнер утă уйăрса, ăна ферма заведующийĕпе старший конюх аллине актпа панă. Силос хывмалли плана та ытлашшипех тултарнă, çулçăллă апатсем 135 лав хатĕрленĕ.

«Молния» колхозра та выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăк планне тултарнă. Çамрăк выльăхсене пĕтĕмпех пăхса усраççĕ. Колхозри паллă доярка Татьяна Иванова кăçал кашни ĕнерен 1.194 литр сĕт суса илнĕ. Халĕ вăл 1.300 литра çитерессишĕн кĕрешет. Сурăх ферминче ĕçлекен Максимова юлташ та колхоза пысăк тупăш парать. Кăçал вăл кашни сурăхран 3,937 килограмм çăм касса илнĕ.

Выльăх витисене вăхăтра юсаса хатĕрленĕ. План тăрăх, выльăхсене хĕл каçарма 4.100 центнер утă-улăм кирлĕ пулать, вĕсене уйăрса хунă. Вăл шутран 1.179 центнерне ферма заведующийĕн аллине актпа панă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Халăх юрри-сăввисем

Савни

Савни ларать, ай, танк çинче,
Ик пулемет, ай, хушшинче.
Тути çырла, пичĕ улма —
Савăнтарать ман чунăма.

Савни пырать, ай, вĕçтерсе,
Аçа-çиçĕм, ай, çиçтерсе,
Тăшман тарать, тăшман тарать.
Манăн чунăм, ай, савăнать.

Çÿлтен вĕçет хура çăхан,
Сапать çăхан йывăр тăхлан —
Манăн савни, ай, аманать,
Манăн чунăм, ай, татăлать.

Савни выртать ăнсăр пулса,
Хĕрлĕ юнне, ай, юхтарса.
Хĕрлĕ сăнĕ, ай, шуралать —
Манăн чунăм, ай, макăрать.

Чĕнеп, чĕнеп, ай, тухтăра,
Паратăп эп хам юнăма.
Савни питне, ай, сăн çапать —
Манăн чунăм, ай, савăнать.

Савни тăрать ура çине,
Савни ларать, ак, танк çине.
Тути çырла, пичĕ улма —
Савăнтарать, ай, чунăма.

Савни пырать, ай, вĕçтерсе,
Аçа-çиçĕм, ай, çиçтерсе.
Тăшман тарать, тăшман тарать—
Манăн чунăм, ай, савăнать.

Кукăль

(Ачасен юрри)

Атьăр, ачсем, тухар-и,
Тимĕр-тăмăр пухар-и.
Шампа хырăм фашистсем
Тимĕр кукăль кÿпчĕр-ха.

Атьăр, ачсем, тухар-и,
Хурăн çырли пухар-и.
Хĕрлĕ Çарти пиччĕсем
Çырла кукăль çиччĕр-ха.

Ăхах ача

Ахах ача çуратрăм,
Ылттăн ывăл вылятрăм,
Вылятрăм та ÿстертĕм,
Ку тарана çитертĕм.
Ахах ачам, ан ахлат,
Ылттăн ывăлăм, ан ыван,—
Тăшмансене тĕп тумасăр
Аннÿ патне ан таврăн.

Ăмĕш юрри

Шуçăм çăлтăр курас тесен,
Ирпе тула тухса пăх:
Пин-пин çутă çăлтăр çинче
Пĕри пулĕ çутăрах —
Çавă пулĕ шуçăм çăлтăр.
Ман ывăла курас тесен,
Вăрçă хирне кайса пăх:
Пин-пин паттăр йĕкĕтсенчен
Пĕри пулĕ паттăртарах —
Çавă пулĕ ман ывăл.

Гр. КРАСНОВ çырнă.

Базара илсе тухаççĕ

Çĕрпÿ хулинчен икĕ километр çурçĕр еннелле Çавал шывĕ хĕрринчи улăхра пахча-çимĕçсем лартса тăваççĕ. Ку пахчара Çĕнĕ Салари «Красный бригадир» колхоз тĕрлĕрен çимĕçсем—хăяр, помидор, купăста, арбуз т. ыт. те йышлăн лартса тăвать. Çак пахчари çимĕçсене Çĕрпÿ хулинчи ĕççыннисем валли базара нумай илсе тухаççĕ.

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Пысăк ыйту çинчен сахал çыракан хаçатсем

Совет Союзĕн гражданĕсене пурне те çар ĕçне вĕрентесси—партипе совет, комсомолпа профсоюз организацийĕсен питех те пысăк задачи. Çак задачăна пурнăçа кĕртес çĕрте пичет те сахал мар вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ. Районри хаçатсем всевобуч подразделенийĕсен ĕçĕсем çинчен кашни номертах тĕплĕн тата усăмлăн çутатса тăмалла.

Пирĕн республикăра тухакан районри хаçатсем, всевобуча вырăнсенче мĕнле хатĕрленни çинчен сахал çырнă пекех, халь ку ĕç мĕнле пыни çинчен те çителĕксĕр çыраççĕ, вĕсем çак пысăк ыйту çинчен хутран-ситрен çеç çиелтен асăнса илеççĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи **«Ĕç ялавĕ»** хаçат октябрĕн 1-мĕшĕнче тухнă номерта пурне те çар ĕçне вĕрентесси пуçланни çинчен пĕр сăмах та асăнман. Тепĕр номерта та вăл икĕ пĕчĕк заметка çеç пичетлесе кăларнă. Октябрĕн 8-мĕшĕнче хаçат всевобучăн малтанхи кунĕсем çинчен çырнă. Анчах хаçат ку расра та ыйтăва тĕплĕн тата усăмлăн çутатса парайман. «Подразделени боецĕсем черетлĕ занятире винтовкăн материальнăй чаçĕсене вĕренчĕç. Тĕрлĕрен(!?) уставсем вĕреннипе пĕрлех, ПВХО ĕçне те хастарлăн вĕренеççĕ», тесе çырать хаçат. Малтанхи занятисенче Хĕрлĕ Çарăн дисциплинарнăй уставне вĕреннĕ, хаçат çавăн çинчен каласшăн пулмалла, анчах ăна «тĕрлĕрен» сăмахпа çеç каласа хăварнă. Дисциплинарнăй устава вĕренсе хăнăхни боецсем хушшинче дисциплинăна çирĕплетме мĕнле пулăшни çинчен «Ĕç ялавĕ» хаçат шарламасть. Вăл юлашки вăхăтра ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентесси районра мĕнле пыни çинчен пачах çырма пăрахрĕ темелле.

Çавăн пекех, **«Октябрь ялавĕ»** хаçат та (Комсомольски р.) пурне те çар ĕçне вĕрентесси çинчен сахал çырать. Чăнах та, вăл всевобуча тытăнма хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен ытти хаçатсенчен ытларах çырчĕ. Вĕренÿ мĕнле пуçланни çинчен октябрĕн малтанхи кунĕсенче тухнă номерсенче кашнинчех çырнă. Юлашки номерсенче ку ыйту çинчен материалсем сахал пичетлеме тытăнчĕ. Сăмахран, подразделенисенче дисциплина мĕнле тăни, политикăллă-массăллă ĕçсен, занятисен пахалăхĕ çинчен хаçат çырмасть.

Йĕпреç районĕнчи **«Колхоз пурнăçĕ»** хаçат всевобуч çинчен çырма октябрĕн 5-мĕшĕнче тин тытăннă. Çав кунне тухнă номерта хаçат пурне те çар ĕçне вĕрентес ыйтупа республикăри хаçат умстатьине пичетлесе кăларнă. Çав номертах «Çар ĕçне вĕренесси пуçланчĕ» ятлă статья пичетленĕ. Вăл статьяна всевобучăн пирвайхи занятийĕсем мĕнле иртни çинчен калакан фактсем тăрăх çырмалла пулнă. Хаçат çакна туман. Статьяра çынсем занятине мĕнле пухăнни çинчен нумайрах çырнă, çав вăхăтрах занятисен пахалăхĕ çинчен питĕ те сахал асăннă.

Октябрĕн 9-мĕшĕнче хаçат Туçари вĕренÿ пункчĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă.

«Взвод командирĕсем,—тесе çырать хаçат,—Чупуков, Магасев тата Шемякин юлташсем занятисене пысăк пахалăхпа ирттереççĕ. Вĕсене ку ĕçре подразделени командирĕ Егоров юлташ аван пулăшса пырать. Малтанхи вăхăтра хăшпĕр боецсем дисциплинăна пăснă. Командирсем вĕсене Хĕрлĕ Çарăн дисциплинарнăй уставĕ çинчен ăнлантарса панă. Çакăн хыççăн дисциплина çирĕпленчĕ.

Кашни боец вĕренÿре кирлĕ япаласене хăй туса хатĕрлет, боецсем кĕреçе, винтовка, граната макечĕсем тунă. Вĕренÿ пункчĕ Çĕнĕ Чурашри пунктпа ăмăртать».

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи **«Çĕнтерÿ çулĕ»** хаçат октябрĕн 1-мĕшĕнче çакăн пек материал пичетлесе кăларнă: «Пĕрремĕш кунсенчех (?) сборнăй пунктсене вĕренме тивĕçлĕ военнообязаннăйсем пурте çÿреççĕ. Занятисем йĕркеллĕ иртеççĕ. Подразделенисем, уйрăм военнообязаннăйсем пĕр-пĕрин хушшинче ăмăртăва анлăн сарса ячĕç т. ыт. те». Ăçта, хăш пунктра ăмăртăва анлăн сарса янă тата хăш подразделенисенче малтанхи кунсенчех занятисем ăнăçлăн иртнĕ? Ку паллă мар. Çавăнпа та ĕнтĕ вăл статья пĕтĕмĕшле тата ĕненмелле мар пулса тухнă. «Çĕнтерÿ çулĕ» хаçат пĕр заметка çырнă та лăпланса ларнă, октябрĕн 12-мĕшчен вăл ку ыйтупа урăх пĕр сăмах та асăнман.

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăнине тĕрĕс ăнланса илнĕ хаçатсем çак ыйту çинчен тĕплĕн çыраççĕ. Вăл хаçатсен шутне Элĕк районĕнчи «Колхоз хаçачĕ» кĕрет.

Районри хаçатсен всевобуч подразделенийĕсен ĕçĕсем, уйрăм отделенисенче, взводсенче, ротăсенче вĕренÿ мĕнле пыни çинчен кулленех тĕплĕн çырса тăмалла. Çак ĕçри паха опытсене кăтартса ыттисене вĕрентсе пымалла. Çав вăхăтрах всевобуч занятийĕсене ячĕшĕн çеç ирттерме пăхакансене критиклемелле, йăнăшсене çийĕнчех тÿрлетме пулăшмалла.

Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентес ыйту—районри хаçатсен умĕнче тăракан чи пысăк ыйтусенчен пĕри. Çавăнпа та ун çине тимлĕнрех çаврăнса пăхмалла.

Комсомолецсем выльăх-чĕрлĕхе шефа илнĕ

ÇĔРПУ. «Камай» колхозра 11 комсомолец. Вĕсем ĕçре яланах пример кăтартса пыраççĕ. 8 комсомолец агитатор пулса ĕçлеççĕ. Кириллов, Ксенофонтов, Львов комсомолецсем колхозниксене тăтăшах хаçатсемпе Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ, стена хаçачĕсем кăлараççĕ.

11 комсомолецран 6 комсомолецĕ яланах ĕç нормине 200 процентран кая мар тултарса ĕçлеççĕ. Комсомол организацийĕ 30 тонна силос хывса хăварчĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерессипе тăрăшса ĕçлет. Комсомолец Кириллов чăх ферминче, Иванов сысна ферминче ĕçлеççĕ, Карпов, Климентьев юлташсем лашасене шефа илнĕ. Халĕ комсомолецсем выльăх-чĕрлĕхсене валли ăшă витесем хатĕрлеççĕ. Витесене улăмсемпе питĕрсе ăшăтма тытăннă. Кантăксене лартса çитернĕ.

Çавăн пекех «Камай» колхозри комсомолецсем ăшă тумтирсем пухассипе те аван ĕçлеççĕ. Хăйсен хушшинче 6 тир, 4 перчатка, 3 алшиш пухнă.

Комсомолецсем пурте Октябрь праздникĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Ал. ВАСИЛЬЕВ.

ХАЛĂХА ПĔЛСЕ ТĂМА

Газоубежищĕне мĕнле тумалла

Тăшман химипе тапăннă чухне халăха сыхламашкăн **ансат бомбоубежищĕсем (хушăксем)** тума йывăр мар.

Ахаль хушăка газран сыхламалла тăвас тесен, ăна герметизацилемелле (тулашри сывлăш кĕмелле мар тумалла) тата тăпраран фильтр тумалла; тимĕрçĕ лаççинчи евĕрлĕ вĕркĕчсем е йывăçран тунă ансат вентилятор убежищĕне тасатнă сывлăш парса тăрать.

Убежищĕне сывлăш пĕртте кĕмелле мар тăвас тесен, пур шăтăксене те тата маччара, алăк таврашĕнче тачă мар сыпăçса тăракан пур вырăнсене те лайăх питĕрмелле, известь ирĕлчĕкĕпе е тăмпа сăтăрса тухмалла. Мачча витĕр сывлăш ан кĕтĕр тесен, ун çине хулăм сий тăм сараççĕ те, тольпе е руберойдпа витеççĕ.

Ăраснах алăксене сывлăш кĕмелле мар хупăнмалла тăвас пулать (отравляющи веществосенчен хÿтленмелли шăтăксенне икĕ алăк тăваççĕ).

Алăкне хăйне дюйм хулăмăш хăмасене икĕ сий хĕреслĕ çапса тăваççĕ. Сийсем хушшипе газ яман пир (резиналанă е олифăланă пир) хурсан лайăх. Алăкĕ алăк шăтăкĕнчен кăшт пысăкрах пулмалла; вара унăн хĕррисем тавра (хĕрринчен 1—2 сантиметр шаларах) резина трубкăран е пир тĕркинчен т. ыт. те прокладка хураççĕ. Алăка скобасемпе, сăлăпа е савăлсемпе тачă питĕрмелле тăваççĕ.

Шалти алăкне резиналанă материрен е хулăн одеялран, шинель пуставĕнчен т. ыт. те тунă чаршавпа хупăрламалла. Чаршав тумалли пире е пустава олифа сĕрмелле е икĕ енчен те хулăн хут çыпăçтармалла. Сывлăш туртса кăлармалли трубопровода та лайăх герметизацилемелле. Кирлĕ пулсан, трубопровода пробкăпа тачă питĕрсе лартаççĕ.

Тулашри сиенленнĕ сывлăша тасатма тата ăна хупă хушăка кĕртмешкĕн хушăкпа юнашар тăпраран е торфран лакăмлă фильтр тумалла; фильтр çĕр айне хунă сывлăш çулĕпе пĕрлешĕнсе тăрать. Хушăкра хăйĕнче сывлăша фильтр витĕр ĕмтерсе кĕртсе ăна пÿлĕме парса тăма ансат хатĕр тумалла. Çакăн пек хатĕр вырăнне тимĕрçĕ лаççинчи вĕркĕч е йывăç вентиляторсем пулма пултараççĕ.

Тăпраран фильтр тума йывăр мар— ăна ăрасна инструкципе кăтартса панă тăрăх тумалла. Çакăн пек тата вĕркĕчпе йывăç вентилятора та тума йывăр мар.

Фильтрпа вĕркĕч хушăка 15—20 çынна валли сывлăш парса тăма пултарать. Хушăка ытларах халăха хÿтленме шутласа тунă пулсан, вара икĕ шăтăк чавса икĕ фильтр тата сывлăш кĕмелли вĕркĕчлĕ икĕ сывлăш çулĕ тумалла.

Отравляющи веществосемпе сиенленесрен **подвалсенче тунă убежищĕсем** те сыхласа хăварма пултараççĕ.

Çакăн пек убежищĕсене пур çĕрте те аякран пулăшу илмесĕрех тума пулать. Çаксене тунă чухне шыраса тупма йывăр материалсем те кирлĕ мар.

Подвалри пÿлĕмре пур шăтăк-çурăксене те, хушăксене те тĕплĕн питĕрмелле. Стенасене, маччана, урайне, чÿречесене, алăксене, люксене, тĕрлĕ трубасемпе проводсем пырса кĕрекен вырăнсене т. ыт. те пĕтĕмпех герметизацилемелле. Шăтăк-çурăксемпе хушăксене цементпа е известь ирĕлчĕкĕпе питĕрмелле, çак материалсем çук пулсан—улăмпа е утăпа хутăштарнă тăмпа сăтăрса питĕрмелле. Пĕчĕк шăтăк-çурăксене ахаль замаскăпа сĕрсе питĕрмелле. Çавăн пек майпа питĕрнĕ пур вырăнсене те çуллă краскăпа сăрласа хумалла.

Ытлашши чÿрече шăтăкĕсене кирпĕчпе купаласа питĕрмелле те, çиелтен штукатурить туса лартмалла. Питĕрмесĕр хăварнă чÿрече шăтăкĕсемпе вентиляци шăтăкĕсене тачă туса хатĕрленĕ щитсемпе хупласа лартмалла; щитсен хĕррисене герметизацилекен прокладка хумалла. Прокладкăна трубкăран, ăшне вазелин е тавот сĕрнĕ ватка хурса чĕркенĕ пир тĕркинчен т. ыт. те тума пулать. Прокладкăллă çакăн пек щитсене стена çумне сăлăппа, кĕлепе е савăлсемпе тачă сыхăнса тăмалла тăваççĕ. Тулашенчен чÿрече шăтăкĕсене йывăç стенасемпе хÿтĕлемелле; стенасем хушшине 70—75 сантиметр хулăмĕш хăйăр е тăпра тултармалла.

Чÿречесене герметизациленĕ щитсемпе питĕрме май килмесен, икĕ хут рамăнне те пур шăтăк-çурăксене те, чÿрече рамăпа пĕрлешнĕ пур вырăнсене те замазкăпа сĕрсе лайăх питĕрмелле те, замазка çийĕнчен икĕ сий хут çыпăçтармалла.

Убежищĕна кĕмелли вырăнсенче герметически хупăнакан икшер алăк тумалла.

Çакăн пек майпа герметизациленĕ убежищĕра пĕр-паллă хисеп çын хÿтĕленсе юлма пултарать, убежищĕн калăпăшне кура, хÿтĕленекен çынсем унта отравляющи веществосен действийĕнчен темиçе сехет хушши те сыхланса ларма пултараççĕ. Норма тăрăх, пĕр çынна сехетре 2 кубометр сывлăш кирлĕ. Çапла вара 200 кубометр калăпăш убежищĕра 50 çын икĕ сехет хушши хÿтĕленсе ларма пултараççĕ.

Çынсем убежищĕра тата ытларах вăхăт хушши хÿтĕленсе ларма пултарччăр тесен, унта фильтро-вентиляционнăй установкăсем лартмалла.

Тăпраран тунă фильтра шăтăксенче (кун пек чухне ăна тулашĕнчи стенаран $1^1/_2$ метр аяккарах тумалла), е ещĕксенче тума пулать (кун пек чухне ăна убежище ăшĕнчех тăваççĕ).

Шăтăкри фильтра çакăн пек тăваççĕ. Пĕр метр тарăнĕш е ытларах, пĕр квадратлă метр лаптăкĕш шăтăк чаваççĕ. Çакăн пек пысăкĕш фильтр 30—60 çынна валли сывлăш тасатса кăларса тăма пултарать. Шăтăкăн стенисем ан йăтăнччăр тесен, вĕсене кăшт чалăшрах тумалла; стенасем çумне хăма çапма юрамасть. Шăтăк тĕпĕнче татах 30 сантиметр тарăнĕш, пысăк шăтăк тĕпĕн лаптăкĕшĕнчен пĕчĕкрех лаптăклă пĕчĕк шăтăк чаваççĕ, çавăнпа та вара шăтăк тĕпĕнче йĕрытаврах картлашка пек пулса тăрать. Çак картлашкан хĕррине икĕ пăрăс е икĕ тачка хăма хураççĕ. Вĕсем çине, пĕр-пĕринчен 10—20 сантиметр хушă хăварса çинçерех патаксем хураççĕ. Патаксем çине çапă сийĕ, турат е хулă сийĕ хураççĕ те, унтан çакăн пек сиех утă е улăм хураççĕ, вара çиеле фильтр шихтине тултараççĕ.

Шăтăк тĕпĕнчи пĕчĕк шăтăка сывлăш çÿремелли ăрасна труба урлă газоубежище пÿлĕмĕпе пĕрлештереççĕ. Сывлăш çÿремелли трубана шуçран е йывăçран тума пулать. Анчах та, сывлăш çÿремелли трубана питĕ тĕплĕ герметизацилемелле. Çак трубана тăпра айне хураççĕ те çиелти тăприне питĕ хытă таптаса пусăрăнтараççĕ.

Фильтр ăшне тултармалли шихтăна çакăн пек хатĕрлеççĕ: фильтр шихтин тĕп составĕ тăпрапа торфран тăрать. Тăпрара çĕрĕк тăпри мĕн чухлĕ нумайтарах, вăл тăпра мĕн чухлĕ хурарах, вăл çавăн чухлĕ лайăхрах пулать; фильтрта усă курмалли лайăхрах тăпра вăл — пахчари е садри тăпра, вăрманти, йывăç тĕми айĕнчи тăпра пулать. Тăпрана кăпшаклатаççĕ, ăна чулсенчен, çÿп-çапран т. ыт. те тасатаççĕ. Тăприйĕ нÿрĕ пулмалла.

Фильтрсене катăклă е фрезерпа тупнă торфа хума пулать, анчах та, торфа фильтра хурас умĕн малтан вĕтетмелле.

Çакăн пекех тата активированнăй кăмрăкпа тата сÿнтернĕ извеçпе усă курма юрать. Активированнăй кăмрăк вăл—ахаль йывăç кăмрăкĕ, анчах ăна ăрасна майпа активациленĕ: кăмрăка чĕртсе ярса кăвар тунă та, вара ăна кăмрăк сÿнтермелли савăта хурса шывпа хăварт сÿнтернĕ.

Извеçе яланхи пекех сÿнтереççĕ (10 килограмм известь çине 20 литр шыв яраççĕ), унтан фанера листисем çине сарса хурса типĕтеççĕ те вĕтетеççĕ; вара тусанне аласа тасатнă хыççăн çак состав фильтра тултарнă çĕре кайма пултарать.

Тата фильтра хумалли состава урăхла майпа та хатĕрлеме пулать: туса хатĕрленĕ активированнăй кăмрăк çине известь сĕчĕ сапаççĕ те, унтан типĕтеççĕ. Çакăн пек туса хатĕрленĕ состав отравляющи веществосене лайăхрах тытса юлма пултарать.

Фильтра çакăн пек йĕркепе тултараççĕ: чи тĕпне, çапăпа улăм çине, активированнăй кăмрăк сийĕ (20 сантиметр хулăмĕш), е известь сĕчĕпе сапнă кăмрăк сийĕ (30 сантиметр хулăмĕш) хураççĕ. Активированнăй кăмрăк çине известь сийĕ (30 сантиметр хулăмĕш) сараççĕ те, унтан вара 50 сантиметр хулăмĕш тăпра е торф сийĕ хураççĕ. Кашни сийнех, ăраснах стенасем патĕнче, пусса çирĕплетмелле.

Шăтăк тĕлне çиеле икĕ кашта е пăрăс хураççĕ те, вĕсем çине урлă май хăмасем сараççĕ. Çиелтен (хăма çинчен) шăтăка тăмпа е тăпрапа тултарса çеремпе витеççĕ. Çакăн пек майпа тунă çивитти фильтра çиелтен сыхласа тăрать, хĕррисенчен уçă хăварнă хушăксем фильтра сывлăш пырса кĕме май пăраççĕ.

Ещĕк евĕрлĕ фильтра çакăн пек тăваççĕ. 30—60 çын пытанмалли убежище валли фанерăран тунă 120 сантиметр çÿллĕш, 75—125 сантиметр сарлакăш-тăршшĕ ещĕк илеççĕ. Ещĕкре, тĕпĕнчен 15 сантиметр çÿлерех, тепĕр шăтăклă-шăтăклă тĕп çирĕплетсе лартаççĕ; шăтăкĕсем кашни 2-шер сантиметр хушшинче пулмалла. Шăтăклă тĕпĕ çине сетка е сайра тĕртнĕ чăпта сараççĕ. Ещĕкĕн аялти тĕпĕпе шăтăклă тĕпĕ хушшинчи аяккинчи стенкăра шăтăк касса кăлараççĕ те, ăна вара ăрасна патрубок урлă вентилятор патне каякан сывлăш çулĕпе тата убежищĕна сывлăш пырса кĕмелли трубапа пĕрлештереççĕ.

Ещĕкрен тунă фильтра та шăтăк чавса тунă фильтра тултаракан составпах тултараççĕ, анчах та, кунта вĕсен йĕрки тепĕр майлă пулать: малтан тăпра е торф сийĕ (50 сантиметр хулăмĕш), унтан известь сийĕ, чи çÿлте—активированнăй кăмрăк сийĕ хураççĕ.

Тулашĕнчи сывлăша убежищĕна фильтр витĕр ĕмтерсе кĕртме, центробежнăй вентилятор çук пулсан,— ахаль вентиляторпа е тимĕрçĕ вĕркĕчĕпе усă курма пулать. Анчах та, кирек епле пулсан та, убежищĕна кирлĕ таранах сывлăш парса тăмалла тăвас пулать.

Убежищĕсене герметизацилеме тата фильтро-вентиляционнăй установкăсене тума кăткăс оборудовани те, шыраса тупма йывăр материалсем те кирлĕ мар. Ĕçе тăп-тăп, тĕрĕс те юратса çеç тумалла. Чи кĕске срокрах эпир хамăрăн мĕнпур убежищĕсенчен, тăшман сывлăшран химипе тапăнас-тăвас пулсан хÿтленме юрăхлă газоубежищĕсем туса хума пултаратпăр.

Полковник **И. МИРОШНИКОВ.**

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

Халăхăн пархатарлă ĕçĕ

(Редакцине килнĕ çырусем тăрăх)

Совет халăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарне пулăшас тĕлĕшпе пысăк та пархатарлă ĕçсем туса пырать. Çĕршыв оборонин хăватлă фондне туса хуни, халь тата боецсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç пысăк çĕкленӳпе пыни—çаксем вĕсем пирĕн çĕршыври ĕççыннисем ирсĕр тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара мĕн хирлине пĕтĕмпех туса пама хатĕр пулнине кăтартса параççĕ. Кашни совет гражданинĕ унăн малашлăхĕ Германи фашизмне пĕтерсе тăкнинчен килнине лайăх пĕлсе тăрать. Çавăнпа та вăл пĕтĕм чĕрери ырă кăмăлпа Хĕрлĕ Çара пулăшма тăрăшать.

Гитлер совет халăхне хăйĕн чури туса хурасшăн, вăл пирĕн ирĕклĕхпе телейлĕхе туртса илесшĕн. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем çакна та лайăх ăнланаççĕ. Акă мĕн калать Ленин ячĕпе тăракан (Вăрнар р.) колхоз членĕ, 60 çулхи Григорий Васильев: «Гитлерла вăрă-хурахсем совет халăхне хăйсен чурисем туса хурасшăн. Анчах вăл ĕмĕрте те пулас çук! Фашистсене хирĕç çапăçма эпĕ хамăн икĕ ывăла ăсатрăм, часах виççĕмĕш ывăл каять. Кирлĕ пулсан, тăван çĕршывшăн эпĕ хамăн пурнăçа пама та хатĕр». Васильев юлташ боецсем валли пĕр тир, икĕ мăшăр çăм алшиш панă.

Боецсем валли ăшă тумтирсем пухасси сарăлсах пырать. Тени ялсоветĕнчи (Элĕк р.) колхозсен членĕсем 38 тир, 61 килограмм çăм, 24 мăшăр алшиш, 52 алшăлли, 5 мăшăр çăматă т. ыт. пухнă. «Пионер» колхозра кашни колхозник семьи 1—2-шер япала панă. «Прожектор» колхоз членĕсем (Шăхасан р.) кĕрĕк пиншаксем çĕлеме 30 тир пухса панă.

Çавăн пекех, Канаш районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра та ку ĕç аван пырать. Унта 41 тир, 20 килограмм çăм тата ытти япаласем нумай пухнă. К. Афанасьев колхозник виçĕ тир, И. Алексеев—икĕ тир панă.

Банново (Сĕнтĕрвăрри р.) ялсовет председателĕ Степанов, Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Антонов юлташсем пĕрер мăшăр çăматă, пĕрер тир тата чăлхасемпе алшишсем панă. Çӳлте асăннă ялсоветсенче ăшă тумтирсем пухас ĕçе колхозниксем те активлăн хутшăнаççĕ, ку ĕçре вĕсене актив пример кăтартса пырать.

Куславкка районĕнчи «Прогресс» артель членĕсем халь пикенсех боецсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеççĕ. Районри комисси вĕсене пухăннă тирсенчен кĕрĕк пиншаксем çĕлеме панă. Артель вăл заказа хапăл тусах йышăннă. Артель членĕсем заказа срокчен пурнăçласшăн ăмăртса ĕçлеççĕ. Киров ячĕпе тăракан (Первомайски райсн) колхозра 50 хĕрача боецсем валли ăшă алшишсемпе чăлхасем çыхса парнесем хатĕрлеççĕ.

Сивĕ хĕл çывхарса çитет. Боецсем валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем ытларах кирлĕ. Çавăнпа та пирĕн Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе малашне те пысăк çĕкленӳпе туса пымалла.

Ăшă тумтирсем параççĕ

ÇĔРПУ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухакан комиссин районри складне паянхи куна 2.200 тир, 1.060 килограмм çăм, 206 мулаххай, 600 мăшăр носки, 560 мăшăр перчатка, 257 алшăлли, 500 мăшăр пир тăла т. ыт. те пухăннă. Ăшă тумтирсем пухас ĕçе уйрăмăнах учительсем активлăн хутшăнаççĕ. Ойкассинчи туллимар вăтам шкул директорĕ Д. Ефимов пĕр мăшăр çăматă, пĕр мăшăр носки, пĕр мăшăр перчатка, ăшă шарф; Çĕрпӳри вăтам шкулти учительница М. Сорокина 3 мăшăр перчатка, 3 мăшăр носки, алшăлли, ăшă кĕпе тата минтер пичĕ панă. Çавăн пекех Йĕкĕрварти, Виçикассинчи вăтам шкулти учительсем те 3—4-шар япала пачĕç. Склада пухăннă ăшă тумтирсене боецсем валли ăсатма пуçланă. Паянхи куна 490 мăшăр перчатка, 340 мăшăр носки, 190 мулаххай, 50 шарф т. ыт. те ярса панă.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

Тăвай машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар боецĕсене ăшă тумтир парса пулăшас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Ф. Харитонов, А. Алексеев, Н. Прокопьев юлташсем кашниех Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă брюкисем пачĕç.

МТС-ра ĕçлекенсем пурĕ паянхи куна пĕр кĕрĕк пиншак, 3 ăшă брюки, 6 çĕлĕк, пĕр мăшăр носки, пĕр мăшăр алшиш, ăшă кĕпе, 2 алшăлли, 8 тир т. ыт. вак япаласем те чылай пухса пачĕç. Ăшă тумтирсем пухас ĕç сарăлсах пырать.

А. ИВАНОВ.

* * *

ÇĔМЕРЛЕ. Яндашри «Комбайн» колхоз Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеме 20 килограмм çăм, 8 тир тата ваткăпа çĕленĕ ăшă фуфайкăсем пачĕ. Колхозниксем те ку ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Граждăн вăрçин участникĕ Н. Сенаторов юлташ пĕр килограмм çăм, пĕр тир, 6 метр пир, П. Кадеев юлташ 600 грам çăм, пĕр тир, пĕр мăшăр перчатка тата ытти колхозниксем те ăшă тумтирсем хатĕрлесе пачĕç.

А. ЯРАНСКИЙ.

Боецсем валли çăматăсем

Старак (Çĕрпӳ р.) ялĕнчи колхозниксем районри комисси складне пухăннă çăмран 400 мăшăр çăматă йăваласа пама пулнă. Халь вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Колхозниксем çак ĕçе чăнкипех пысăк хисепе хурса ĕçлеççĕ. П. Арсентьев, А. Клементьев, Н. Федоров колхозниксем 8-шар мăшăр çăматă йăваласа панă та ĕнтĕ.

Çавăнпа пĕрлех, колхозницăсем боецсем валли парнесем хатĕрлеççĕ, вĕсем çăм чăлхасемпе алшишсем çыхаççĕ. Сăмахран, Т. Трофимова, М. Иванова малтан пĕрер тир панă пулнă, халь вĕсем çăм чăлхасем çыхса хатĕрлеççĕ.

Г. П-в.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Янкас ялсоветĕнче боецсем валли 31 тир, 52 килограмм çăм пухнă. Упи ялсоветĕнчи колхозниксем ăшă тумтирсем хатĕрлеме 81,2 килограмм çăм пухса панă.

С. ВАНИН.

Актив начар хутшăнать

ЙĔПРЕÇ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе учительсемпе ялти актив халĕ те çителĕксĕр хутшăнаççĕ-ха. Чăрăшкасси, Клешкасси, Туçа, Кĕлĕмкасси, Хумпуç-Патăръел, Андреевка, Шăртан шкулĕсенче учительсем чылайĕшĕ ăшă тумтирсем пухас ĕçе хутшăнман.

Кĕлĕмкассинчи туллимар вăтам шкул директорĕ И. Алексеев хăй те нимĕнле япала та паман. К. Перьева, И. Тимофеев, А. Кузьмин учительсем те çак пысăк ĕçе хутшăнасси çинчен шухăшламаççĕ.

Хăшпĕр ялсоветсенчи актив хăй çак ответлă ĕçе хакламасăр тăрать. Хурамал ялсоветĕнче активистсем 47 çын, вĕсенчен ăшă япаласем 14 çын панă, Хумпуç Патăръел ялсоветĕнче 40 çынран 24 çын кăна панă. Çак асăннă ялсоветсенче кашнинчех пуçламĕш парторганизацисем пур, анчах та парторганизацисем çак ыйтупа çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухасси пĕтĕм халăхăн чыслă ĕçĕ пулса тăчĕ. Çак ĕçе учреждениссенче организацилес çĕрте профсоюзсем пикенсе ĕçлемелле. Апла пулсан та, районри хăшпĕр профсоюз организацийĕсем ку ĕçе çителĕклĕ хутшăнмаççĕ. Сăмахран, çыхăну конторинчи профорг Сейфуллин юлташ ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе профсоюз членĕсем хушшинче нимĕн те тумасть, вăл хăй те пĕр япала та паман.

Çавăн пекех райçĕрĕç пайĕнчи профорг Мустафин, Кривцова (медсантруд) юлташсем те çак ĕçпе сахал интересленеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ районри хăшпĕр учреждениссенчи ответлă работниксемех ку ĕçрен пăрăнса юлнă. Уйрăмах райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем Казаков, Алексеев т. ыт. юлташсем ăшă тумтирсем пухас ĕçе начар хутшăнаççĕ.

В. ВИКТОРОВ.

Пособисем илеççĕ

ЕТĔРНЕ. Балдайри Буденный ячĕпе тăракан колхозран иртнĕ çулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă çамрăк А. Воробьев Хĕрлĕ Çар ретне тухса кайрĕ. Тăван килне 70 çулхи ватă амăшĕпе çамрăк шăллĕ юлчĕç.

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ вăрçă вăхăтĕнче рядовой тата кĕçĕн начальство составĕнчи военнослужащисен семьисене пособисем парасси çинчен кăларнă Указ тăрăх, А. Воробьевăн амăшĕ Татьяна уйăха 75 тенкĕ пособи илет.

Арсений халĕ Действующи арминче урса кайнă юнĕçен гитлерла бандитсен вăрă-хурахла шайкине хирĕç паттăррăн çапăçать.

Çавнашкалах Парасковья Ильина, Дария Клочкова тата ыттисем те пособи илеççĕ.

В. СОКОЛОВ.

ССР Союзĕпе пĕр шухăшлă пулас движени

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулас движени сарăлса пыни çинчен Америка хаçачĕсем кашни кунах пĕлтереççĕ, массăллă митингсенче американецсем ССР Союзне активлăн пулăшма ыйтаççĕ.

Октябрĕн 18-мĕшĕнче профсоюзсемпе ытти организацисен представителĕсен, вырăнти интеллигенцин паллă представителĕсемпе пĕрле Чикаго хулинче пулса иртнĕ митингра «Российăна пулăшакан комитетăн» отделенине организацилеме йышăннă.

Октябрĕн 14-мĕшĕнче Рочестере (Нью-Йорк штачĕ) пурăнакан украинецсен, поляксен, литовецсен, вырăссен, итальянецсен тата еврейсен митингĕнче революци йышăннă, çав резолюцире митинг участникĕсем Хĕрлĕ Çара пуренĕпе те пулăшса тăма хушаççĕ. Кун пек митингсем США-ри, Канадăри тата Латинла Америкăри ытти хуласенче те пулса иртеççĕ. ССР Союзĕн США-ри посольстви уйрăм çынсенчен тата тĕрлĕ организацисенчен кашни кунах çĕршер çыру илсе тăрать, çав çырусенче Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулни çинчен, Хĕрлĕ Çар геройла çапăçнинчен тĕлĕнсе савăнни çинчен тата пĕтĕм этемлĕхшĕн тăшман пулса тăракан гитлеризма хирĕç кĕрешес çĕрте пулăшу пама хатĕрри çинчен калаççĕ.

Пĕр летчик негр хăйĕн çырăвĕнче çапла çырать: «Совет Союзĕ туса пыракан аслă кĕрешӳре ăна пулăшма май пуласса кĕтетĕп». Негр-врачсен групни Хĕрлĕ Çара пулăшма хатĕрри çинчен пĕлтерет.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, США-ра пурăнакан вырăссем «Совет Российăн хĕçпăшаллă вăйĕсене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен вырăссемпе американецсен комитетне» тунă. Комитет пĕтĕм çĕршыв тăрăх укçа пухса Хĕрлĕ Çара валли парнесем яма шухăшлани çинчен пĕлтернĕ. Çав комитетăн хисеплĕ председательне Вениамин митрополита суйланă. Комитет секретарĕ США государство департаменчĕ çавăн пек комитет тунине ырлани çинчен пĕлтернĕ.

Протестантла епископсен çырăвĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, протестантла епископсемпе духовенствăн ытти представителĕсем пĕтĕмпе пин çын ытла Рузвельт патне пĕрлешӳллĕ çыру янă. Çав çырура вĕсем Совет Союзне мĕнле те пулин ытларах пулăшу пама чĕннĕ.

«Эпир,—тенĕ çырура, — англичансен тата вырăссен православнăй чиркĕвĕ çумне хутшăнатпăр, вырăс халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарне пулăшма чĕнетпĕр. Эпир çакна шанса тăратпăр: вырăссем Гитлера чарса лартма пултарсан, çакă вăл хĕвеланăçĕнчи державăсем те пысăк çĕнтерӳ тунине пĕлтерет. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсем çине фашизм килсе тапăнассине кĕтсе лармa пултараймаççĕ. Ирĕклĕх хăй вăл наступление каймалла. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче фашизмшăн тăракан çынсене сивлесе, çыру авторĕсем çапла çырнă: «Хальхи вăхăтра, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Англин представителĕсем Российăна геройла хӳтлекенсемпе тĕлпулса виçĕ çĕршывăн пĕрлешӳллĕ вăйĕсене хăвăрттăн пĕтĕçтерес тĕлĕшпе ăнаçлă мерăсем йышăннă хыççăн, Америка халăхĕн пуçне противник идейисемпе пăтраштарма никама та ирĕк памастпăр эпир»,—тенĕ. Çак çырăва—епископ Мандик (Нью-Йорк), епископ Гопсон (Огайо штачĕ), епископ Компlinг (Чикаго) тата духовенствăн ытти паллă представителĕсем нумайĕш алă пуснă.

Тата пĕр миллион пама ыйтать

ЖЕНЕВА, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсем: Германия Италирен салтаксемпе офицерсем пĕр миллион çын пама ыйтнă, тесе пĕлтереççĕ. Çавăн пек ыйтасси вăл çакна пула тухса тăнă: Хĕвелтухăç фронтне нимĕçсен ирĕксĕрех хăйсен мĕнпур вăйĕсене куçарса кайма лекнĕ, халĕ ĕнтĕ вĕсене фронта тĕреклетме те, оккупациленĕ çĕршывсенчи йĕркелĕхе тытса тăма та çĕнĕ вăйсем кирлĕ. Çапла кăтартса параççĕ: Германи правительстви Италин миллионлă çарĕнчен пĕр пайне—Хĕвелтухăç фронтне ăсатма, тепĕр пайне—оккупациленĕ çĕршывсенче гарнизон службине туса пымашкăн яма шутлать. Итальянецсемпе чи малтан Франци хулисенчи гарнизон службинче усă курма палăртаççĕ. Лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсенче çакна кăтартса параççĕ: юлашки вăхăтра Франци патриочĕсем Германи салтакĕсемпе офицерĕсем çине пыра-пыра тапăнасси массăллăн пула пуçланă. Ĕç питех те шала кĕрсе пырать. Нант хулинче, сăмахран, Германи çарĕн командующине Гольц генерала та вĕлернĕ. Кунта нимĕнле репресси те пулăшмасть, пачах урăхла, çавăн пек репрессисем тунине пула оккупантсене курайманни вăйланса кăна пырать. Франци хулисенче Германи çарĕсен гарнизонĕсене Итали гарнизонĕсемпе улăштарса, Германи влаçĕсем Франци халăхĕн çиллине хăйсем çинчен Итали çине сирсе ярассине шанаççĕ.

Англи хаçачĕ нимĕçсен Хĕвелтухăç фронтĕнчи пысăк çухатăвĕсем çинчен

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат нимĕçсем Хĕвелтухăç фронтĕнче пысăк çухатусем тӳснине кăтартса паракан çĕнĕ сведенисем парать. Иртнĕ эрнере Познаньрен тухса килнĕ пĕр наблюдатель, тесе çырать хаçат, çапла пĕлтерет: юлашки вăхăт хушшинче хула витĕр кашни кунах вăтамран аманнисене тиенĕ 20 поезд иртсе каять. Çавăн пек поездсенче кашнинче 40 вагона яхăн. Вăрçă пуçлансанах аманнисене турттаракан поездсем çĕрле çеç иртсе çӳретчĕç. Хальхи вăхăтра вĕсем кăнтăрла та, çĕрле те хĕвеланăçнелле иртеççĕ, халĕ ĕнтĕ нимĕçсем хăйсен пысăк çухатăвĕсене халăхран пытарма пултараймаççĕ.

Варшаваран пĕлтернĕ тăрăх, унта уйрăм çынсен çурчĕсене тата обществăллă çуртсене госпитальсем туса хунă. Вунă кун каярах нимĕçсем хула варринчи банкăн пысăк çуртне йышăнса илнĕ, ăна та госпиталь туса хума шутлаççĕ. Халĕ ĕнтĕ аманнисене Германие тата оккупациленĕ çĕршывсене çеç мар, çавăн пекех Италие те ăсатаççĕ.

Нумай пулмасть, Бреславльрен тавăрнă çулçӳревçĕ хулари чылай çуртсене çар госпиталĕсем туса хунă, тесе пĕлтерет.

Гитлер çарĕнчен массăллăн тарни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Америкăри Оверсис ньюс агентстви çапла пĕлтерет: Норвегирен пырса çитнĕ çынсем каласа панă тăрăх, сентябрь уйăхĕн варринче Германин аманнă салтакĕсемпе офицерĕсем 40 пин çын ытла Финляндирен Норвегие пынă.

Нимĕçсен шухăш-кăмăлĕсем, тесе каласа параççĕ беженецсем, палăрмаллах начарланнă. Çакăн пек фактсем те пур: Хĕвелтухăç фронтне ăсатнă чухне нимĕç салтакĕсем, хăйсем часах вилессе сиссе, макăрмаллипех макăраççĕ. Германи çарĕнче, уйрăмах салтаксем хушшинче, хăйсене хăйсем вĕлерекенсен шучĕ чылай ӳснĕ. Çартан тарасси çавтери пысăккăн сарăлса кайнă пирки, çартан тарнă нимĕç салтакĕсене нимĕнле пулăшу та пама юраманни çинчен халăха асăрхаттаракан плакатсене пĕтĕм Норвегире çапса тухнă. Дезертирсене пулăшнине асăрхасан, çавнашкал çынсене çийĕнчех военно-полевой суд аллине параççĕ.

Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи верховнăй командованийĕ кăларнă коммюнике

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи верховнăй командованийĕ кăларнă коммюникене парать, унта çапла каланă: Кăнтăр Африка Союзĕн бомбăсем пăрахакан авиацийĕ октябрĕн 18-мĕшĕнче Киренаикăра противникăн аэродромĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Дернăра бомбăсене противникăн самолечĕсем вырнаçса тăракан район çине пăрахнă. Анчах та, санталăк тĕтреллĕ пулнипе, бомбăсем çурăлнин результачĕсене сăнама йывăр пулнă. Эль-Газалăра противникăн икĕ аэродромĕ çине бомбăсем ăнаçлăн пăрахнă. Эль-Газалăран кăнтăр енче бомбăсем казармăсем çине пырса ӳкнĕ.

Октябрĕн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Сицили утравĕ çине пырса тапăннă. Бомбăсене аэродром çине пăрахнă. Бомбăсем чупса пырса вĕçсе çĕкленмелли площадка çине, çавăн пекех тĕрлĕрен çуртсемпе аэродромсем çине те ӳкнĕ. Пушарсем инçетренех курăннă.

Çав вăхăтрах, санталăк начаррине пăхмасăрах, Англи самолечĕсем Бенгази портне атакăланă. Бомбăсем порт сооруженийĕсем çине, çавăн пекех портра тăнă суднăсем çине те ӳкнĕ.

Азозо районĕнче (Абиссиния) октябрĕн 17-мĕшĕнче Англин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем противникăн позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Чылай бомбăсем окопсене тата противник пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсене тĕл пырса ӳкнине палăртнă. Англин çак операцисене хутшăннă самолечĕсем пурте хăйсен аэродромĕсене чиперех таврăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: октябрĕн 18-мĕшпе 19-мĕш хушшинче çĕрле йывăр бомбардировщиксем Бенгази порчĕ çине пырса тапăннă. Молсенчен пĕринче пушар тухнă, вăл горючи склачĕ çине бомбăсем ӳкнипе тухнă пулмалла. Пушарсем ытти молсенче те тухнă. Тинĕс авиацийĕ противникăн Соллумри боеприпассен склачĕ çине бомбăсем пăрахнă. Вăтам бомбардировщиксем Ливире противникăн самолетсем анса лармалли площадкисене аркатнă. Пунктсенчен пĕринче бомбăсем форт çине ӳкнĕ. Октябрĕн 18-мĕшпе 19-мĕш хушшинче çĕрле авиаци суднăсен караванĕ çине бомбăсем пăрахнă, çав караван çине иртнĕ çĕрле те тапăннă пулнă. Суту-илӳ тумалли суднăсенчен чи пысăкки çине виçĕ торпеда пырса ӳкнĕ, судно çунма пуçланă. Тепĕр судни те сиенленнĕ пулмалла. Енер Ликатăпа Сицилири пăшал завочĕпе электростанци çине тата Комизори аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Трепаньри аэродром çине пырса тапăннă чухне противникăн çĕр çинче ларакан пĕр самолетне пĕтерсе тăкнă. Çак операцисенчен пĕр самолет каялла таврăнман.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Англин Информаци министерстви Англи авиацийĕ октябрĕн 12-мĕшпе 19-мĕш хушшинче Европăра тунă операцисем çинчен тĕплĕн пĕлтернĕ. Çав вăхăт хушшинче Англи самолечĕсем Германи çине тата вăл оккупациленĕ çĕршывсем çине темиçе хутчен пысăк тапăнусем тунă. Çичĕ каçран пилĕк каçĕнче Англи самолечĕсем Германи территорийĕ çинче пулнă. Çав тапăнусенчен чи пысăкки октябрĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Нюренберг çине тапăнни пулса тăнă. Вăл тапăнура Англин 300 бомбардировщикĕ ытла пулнă. Çав вĕçевре пулнă летчиксем хулари чылай промышленноçлă предприятисенче пысăк пушарсем тухни çинчен пĕлтереççĕ. Нюренберг Баварире иккĕмĕш пысăк хула пулса тăрать, унта фабрикăсемпе заводсем нумай.

Иртнĕ эрне хушшинче Англи авиацийĕ Кельн çине икĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахнă. Çавăнпа пĕрлех Бремен, Дюссельдорф тата Дуисбург хулисем çине те бомбăсем пăрахнă.

Англи самолечĕсем оккупациленĕ çĕршывсен çыранĕсенчи çар объекчĕсем тата противникăн суднисем çине кăнтăрла та, çĕрле те пыра-пыра бомбăсем пăрахаççĕ. Булоньри порт çине тăватă хут пырса бомбăсем пăрахнă, Дюнкерк, Остенде тата Кале çине—пĕрер хут. Мазингарбре хими промышленноçĕн завочĕсем çине тата электростанци çине бомбăсем çĕнĕрен пăрахнă. Норвеги çыранĕсем патĕнче Англи самолечĕсем Германин çар карапне путарнă. Авиаци пырса тапăннипе противникăн 15 суднинчен кая мар путарнă, çунтарса янă е сиенленĕ.

Çавăн пекех Англи истребителĕсем те противникăн аэродромĕсем, зенитнăй артиллери посчĕсем, тавар турттаракан поездсем тата çар карапĕсем çине те пырса тапăнас ĕçе хутшăннă.

Çав мĕнпур операцисенчен Англин 51 самолечĕ каялла таврăнман. Икĕ летчик çăлăнса юлнă. Çав вăхăт хушшинче Германин 34 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Англи авиацийĕпе Германи авиацийĕн çухатăвĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вĕçленнĕ эрне хушшинче Англи авиацийĕ Европа çинче пулса иртнĕ операцисенче 56 самолет, противник авиацийĕ—4 самолет çухатнă. Çак вăхăт хушшинче противникăн самолечĕсем пысăк активлăхах кăтартман, çав вăхăтрах Англи самолечĕсем Германири тата вăл оккупациленĕ çĕршывсенчи промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахса пысăк сиен кӳнĕ, çаксене шута илсен вара çухатусем противникăн ытларах пулни курăнать.

Германи авиацийĕ Англи çине тĕллипаллисĕр пырса тапăннă вăхăтра противник виçĕ самолет çухатнă, çав вăхăтрах çак операцисенче Англин пĕр çухату та пулман.

Голландире пăлхавсем пулса иртнĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕш. (ТАСС). Америкăри Оверсис ньюс агентствин Лондонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: нацистсен влаçĕсем хăйсем те йышăннă тăрăх, нумаях пулмасть Утрехт хулинче (Голландия) пăлхавсем пулса иртнĕ. Çав пăлхавсем вăхăтĕнче штурмовой отрядсемпе вырăнти граждăнла халăх хушшинче чылай пысăк тытăçусемех пулнă.

Голланди тĕрмисем тулса ларнă

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Голландири Анета агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç массăллă выступленисем тунă пирки, Голландири тĕрмесем пурте йăлтах тулса ларнă. Иртнĕ эрнере Германи влаçĕсем Амстердамра «Ллойд» ятлă пысăк гостиницăна тĕрме туса хунă.

Хэлл заявленийĕ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Пичет представителĕсемпе калаçнă чух США-н государственнăй секретарĕ Хэлл çапла пĕлтернĕ: Америкăн «Кирни» эсминецне тапăнни Гитлер континентсем çинче кăна мар, тинĕссем çинче те пуç пулса тăма шутланине пит лайăх кăтартса парать, тенĕ.

США' çак ĕçе хирĕçлесе Германие нота пама шутлать-и?—тесе ыйтсан, Хэлл çапла каланă: тĕнчери вăрă-хурахсем патне дипломатиллĕ нотăсем эпĕ сахал яратăп,—тенĕ.

Уилки заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Республиканецсен партин лидерĕ Уилки радиопа тухса каланă чух çапла пĕлтернĕ: мирлĕ пурнăçа тытса тăрас шанчăка США-н пачах пăрахас пулать. Берлинри военщинăпа нимле калаçусем тума та юрамасть. Пиратсене çĕр çинче те, çавăн пекех тинĕс çинче те бандитла ĕçсем тума чарса лартас пулать. Эпир ку тĕлĕшпе чылаях хăвăрт ĕçлемесен, ытла та кая тăрса юлма пултаратпăр.

Бразилире нацистла организацие хупни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕш. (ТАСС). Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Рио-де-Жанейроран пĕлтернĕ тăрăх, Бразили влаçĕсем нацистсен татах тепĕр организацине хупма йышăннă. Çак организаци спорт тĕлĕшпе ĕçленĕ пек пулса, Бразили государствине хирĕç ишĕлтерӳллĕ ĕçсем туса пурăннă. Çак организаци Санта Катарина штатĕнче уйрăмăнах вăйлă активлăхпа ĕçленĕ.

Нимĕçсем норвежецсен пурлăхĕсене туртса илеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин верховнăй комиссарĕ Тербовен мĕнпур норвежецсене Норвегири палаткăсене, ранецсене, свитерсене, йĕлтĕр костюмĕсене, кĕске пиншаксене пĕтĕмпех Германи çарне пама приказ кăларнă. Çак приказа пăсакан çынсене виçĕ çуллăха тĕрмене хупса лартаççĕ.

Нимĕçсем Вейгана ĕçрен кăларма хушаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ, ĕненме тивĕçлĕ сведенисем тăрăх, çапла пĕлтерет: иртнĕ эрнере нимĕçсем Петэн умне Вейган генерала ĕçрен кăларма требовани тăратнă.

Францири фашизма хирĕçле вăрттăн ĕçлекен организацисем

ЖЕНЕВА, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Брюссель хулинче тухса тăракан «Брюсселер цейтунг» ятлă нимĕç хаçачĕ çапла пĕлтерет: Тулон хулинче Меро ятлă пĕр çамрăк француза суд тунă. Ăна Кăнтăр Африкăри 11 департаментра фашизма хирĕçле вăрттăн ĕçлекен организаци тунăшăн айăплаççĕ. Çак организаци Виши правительствипе хирĕç вăйлăн ĕçлесе тăнă. Ку организаци Францин оккупациленĕ пайĕнчи фашизма хирĕçле вăрттăн ĕçлекен ушкăнсемпе çыхăну тытса тăнă. Мерона асаплантарса вĕлермелле приговор йышăннă.

Францире фашизма хирĕçле организацисем пурри çинчен пĕлтерекен пĕррремĕш хыпар мар ку. Çав хаçатах Париж районĕнче Германие хирĕçле вăрттăн ĕçлесе тăнă организацие тытни çинчен пĕлтернĕ. Çак организаци анлăнах сарăлса кайнă пулнă. Организацин членĕсем саботажсем туса пынă, фашизма хирĕçле листовкăсем сарнă. 24 çынна арестленĕ. «Брюсселер цейтунг» ку фактсем пирки хăраса ӳкнĕ, антифашистсене вăйлăрах айăплама хушать.

Франци летчикĕсем де Голль патне тарса параççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕш. (ТАСС) Де Голль çарĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Франци сывлăш флочĕн виçĕ летчикĕ истребительсем çинче Çурçĕр Африкăран союзниксем йышăннă территори çине вĕçсе пынă та де Голль çарне кĕнĕ.

Вăрман хатĕрлес ĕçе хакламалла

ÇĔРПУ. Вăрманпромхозăн кăçал 4-мĕш кварталта районри учреждениссемпе колхозсем валли вутă тата строй. материалсем темиçе пин фестметр касса хатĕрлемелле. Вăрман касса хатĕрлеме вăрманпромхоз çумне 30 колхоза çирĕплетнĕ.

Паянхи куна вăрман хатĕрленĕ çĕрте «Молодая сила», «Комбайн», «Коснария», «Дружба», «Красный плуг» колхозсенчен мĕнпурĕ те 53 çын çеç ĕçлет. Вĕсем паянхи куна 700 кубометр çеç касса хатĕрленĕ.

Вăрман касас ĕç—пысăк та ответлă ĕç. Çак ĕçе районри колхозсен халех хутшăнмалла.

Г. П.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабсельксорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7113. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. 6. 58Х84 п. л.